Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

85 (8046) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи чÿк (ноябрь) уйăхĕн 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Коллектившăн тăрăшать



*Сăн ÿкерчĕкри «Визит» суту-илÿ çурчĕн директорĕ Л. Николаева районти хĕрарăмсен канашĕн конференцине хутшăнчĕ, вăл асăннă канашăн членĕ. Пурнăç уттипе тан утакан пултаруллă ертÿçĕ хÿттинче сакăр ĕçчен вăй хурать. Лилия Валерьевна вара, ĕç паракан пулнă май, унта кашни вăй хуракана социаллă пакетпа тивĕçтерет. Л. Николаева икĕ ача амăшĕ пулнă май çакна хăйĕн тивĕçĕ тесе шутлать.*

Р. МАКАРОВА.

Ноябрĕн 4-мĕшĕ – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çак уяв Тăван çĕр-шыв хăвачĕпе аталанăвĕшĕн Раççей халăхĕ пĕрлешме пултарнин историллĕ таран традицийĕсене палăртать. Шăпах ĕнтĕ пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă пулнипе тата тăван çĕре юратнипе пирĕн мăн асаттесем хăйсен никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне сыхласа хăварма пултарнă. Вĕсен паттăрлăх тĕслĕхĕсем çавна кăтартса параççĕ: тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсем хăйсен тĕн тата шухăшлав уйрăмлăхĕсене пăхмасăр истори традицийĕсене сыхласа хăварни, пĕр-пĕрин культурине хисеплени кăна обществăри тăнăçлăхпа çураçăва тивĕçтерме пултараççĕ.

Нумай нациллĕ Раççей Федерацийĕнче Чăваш Республики тивĕçлĕ вырăн йышăннипе эпир мухтанатпăр. Унта килĕшÿпе çураçура, хăйсен хутшăнăвĕсене пĕрпĕрне хисеплени çинче йĕркелесе 128 наци çынни, 8 халăх ушкăнĕ тата 14 конфесси представителĕ пурăнать.

Хальхи пурнăçра наци политикине тĕрĕс суйласа илни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Республикăра пурăнакан пур халăхсене те социаллă тата наципе культура тĕлĕшпе аталанма тулли правăллă майсем туса парас тĕллевпе Чăваш Енре Раççей Федерацийĕн 2010 – 2020 çулсенчи Патшалăх наци политикин концепцине пурнăçлассипе подпрограмма йышăннă. Тĕрлĕ наци представителĕсем хушшинчи культурăпа экономика çыхăнăвĕсене çирĕплетес ĕçсем пыраççĕ.

Пĕрле пулсан эпир харпăр хăйĕн культурăпа конфесси уйрăмлăхĕсене сыхласа хăварма та, кунпа пĕрлех пур проблемăсене татса пама та, пур чăрмавсене сирме те пултаратпăр.

Шанса тăратăп, халăхсем хушшинчи туслăха черченнĕн сыхласа тата хушса, нумай нациллĕ пĕрлĕхе çирĕплетсе, наци традицийĕсене пур енлĕн аталантарса пырса эпир ăс-хакăл тата экономика тĕлĕшпе вăйлă Чăваш Ен туса хурăпăр.

Пурне те сывлăх, ырлăх, телей, пĕр-пĕрин хушшинче ăнлану тата ăнăçу сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**
**МУРКАШ РАЙОНĔН ÇЫННИСЕМ!**

Сире пурне те çывхарса килекен Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн тата Килĕшÿпе çураçу кунĕсен ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уявсем пире тĕрлĕ наци çыннисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни тата халăх пĕрлĕхĕ мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине кăтартса параççĕ. Çакна хамăр çĕр-шывăн историйĕн страницисем те çирĕплетеççĕ.

Пĕрле чухне çеç йывăрлăха çĕнтерме, умри тĕллевсене пурнăçлама пулать. Паян пурнăç хăвăрт улшăнса тăнă чухне уйрăмах асра тытмалла çакна. Кун-çул уттинчен юлмалла мар пирĕн. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла, пĕр тĕллевлĕн, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хумалла, кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче чунне парса ĕçлемелле. Çавăн чухне çеç кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме пулать. Вара çĕр-шывăмăр, районăмăр татах та вăйлăрах, çирĕпрех, тĕреклĕрех пулĕ. Çакна пирĕн ку таранччен туса ирттернĕ ĕçсем те çирĕплетсе параççĕ. Пурнăçламалли вара пирĕн паян та сахал мар. Ăнлану, пĕрлĕх малти вырăнта пултăр малашне те.

Малалла та пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕр-пĕрне хисеплесчĕ, ăнланасчĕ, пĕр тĕллевлĕн ĕçлесчĕ. Вара мĕн палăртни пурнăçланĕ.

Пурне те çирĕп сывлăх, килĕшÿ, ăнлану, телей, юрату, вăрăм кун-çул сунатăп.

**В. АНАНЬЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ.**

Хаксем

## Ăçта йÿнĕрех

Районта вырнаçнă суту-илÿ точкисенче октябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсене танлаштарса кăтартни.

**Колонкăсенче: 1.Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем; 2. Муркаш РПО "Гастроном"; 3. "Визит" ; 4. "Елена"; 5. "Родничок"; 6. Мăн Сĕнтĕр РПО "Гастроном".**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăх (тукмаксăр пуçне), кг | 110 | 125 | 105 | 115 | 110 |
| Шăнтнă пулă, кг | 45 | 65 | 50 | 46 | 39 |
| Услам çу, кг | 240 | 160 | 155 | 120 | 147 |
| Тип çу, кг | 52 | 58 | 54 | 62 | 53 |
| Сĕт, л | 29,50 | 32 | 34 | 28,50 | 27 |
| Çăмарта, 10 шт. | 34 | 32 | 33 | 35 | 28 |
| Сахăр песукĕ, кг | 28 | 28 | 29 | 27,80 | 28,50 |
| Тăвар, кг | 7,50 | 7 | 10 | 10,50 | 7,40 |
| Хура чей, кг | 210 | 200 | 220 | 210 | 160 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 19 | 20 | 21 | 19 | 21 |
| Рис, кг | 30 | 28 | 29 | 29 | 28,70 |
| Вир, кг | 18 | 17 | 17 | 17,50 | 15,70 |
| Хура тулă, кг | 34 | 33 | 35 | 34,50 | 33 |
| Вермишель, кг | 23,40 | 24 | 21 | 23,50 | 19 |

## Пусмăрçăсене хирĕç пĕрле çĕкленнĕ

1612 çулта Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский ертсе пынипе халăх Мускава Польша интервенчĕсенчен хăтарнă. Çапла вара Аслă пăтрашăнчăк вăхăчĕ вĕçленнĕ.

Октябрĕн 22-мĕшĕнче (Григориан календарĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕнче) Кузьма Минипа Дмитрий Пожарский ертсе пынипе халăх ополченийĕн çыннисем Китай-города штурмпа илнĕ. Поляксен Речь Посполитая гарнизонĕ Кремле чакнă. Пожарский княç Китай-города Турă Амăшĕн Хусанти турăшĕпе кĕнĕ, çак çĕнтерĕве халалласа чиркÿ туса лартма шантарнă.

Интервентсен гарнизон командованийĕ капитуляцие алă пуснă. Хыççăнах Кремльтен Мускав боярĕсемпе ытти паллă çынсене кăларса янă. Тепĕр кунне (октябрĕн 27-мĕшĕнче) гарнизон парăннă. 1613 çулхи февраль вĕçĕнче земство соборĕ çĕнĕ патшана Романовсен династийĕн пĕрремĕш вырăс патшине Михаил Романова суйланă.

1649 çулта Алексей Михайлович патша указĕпе Турă Амăшĕн Хусанти турăшĕн кунне (Юлиан календарĕпе октябрĕн 22-мĕшĕ) патшалăх уявĕ тесе паллă тума тытăннă. Ăна вицĕ ĕмĕре яхăн 1917 çулччченех уявланă.

Вырăс православи чиркĕвĕн календарĕпе çак кун 1612 çулта Мускавпа Раççее поляксенчен ирĕке кăларнине халалласа Турă Амăшĕн Хусанти турăшĕн кунне уявлаççĕ. Юлиан календарĕпе вăл октябрĕн 22-мĕшне килет. Иртнĕ ĕмĕрсем хушшинче Юлиан тата Григориан календарĕсем хушшинчи шайлашу чылай улшăннă май çак кун ноябрĕн 4-мĕшне куçнă. Шăпах ĕнтĕ çак куна – Юлиан календарĕпе октябрĕн 22-мĕшне, Григориан календарĕпе ноябрĕн 4-мĕшне – патшалăх уяв кунĕ тесе суйласа илнĕ.

Уявăн паянхи историйĕ çапларах. Халăх пĕрлĕхĕн кунне ноябрĕн 4-мĕшĕнче уявлама кирлине Раççейри Тĕнсен канашĕ 2004 çулхи сентябрь уйăхĕнче чĕнсе калачă. Ăна Патшалăх Думин ĕçпе социаллă политика комитечĕ ырланă. 2004 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче Мускавпа Пĕтĕм Раççей патриархĕ II Алексий уява ноябрĕн 4-мĕшне паллă тума кирлине официаллă каланă.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче çак пуçарăва Думăри «Единая Россия» фракци ертÿçин çумĕ В. Богомолов ырланă.

2004 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче Патшалăх Думине çĕнĕ саккун проектне тăратнă. Çав çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнче ăна вицçĕмĕш вулавра йышăннă. Çапла вара вăл саккунлă вăя кĕнĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

## Ĕççĕррисем – 43 çын

***Кăçал çулталăк пуçланнăранпа районти ĕçпе тивĕçтерекен центра юрăхлă ĕç шыраса 1152 çын пынă.***

Эрне хушшинче ĕççĕррисем тесе регистрациленĕ çынсен хисепĕ чакнă, октябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне 43 çынна танлашнă. Ĕççĕрлĕх шайĕ 0,21 процентпа танлашать. Ĕç паракансем тăратнă заявкăсемпе килĕшÿллĕн вакантлă ĕç вырăнĕсем 208. Ку кăтарту унчченхи эрнеринчен 5 вакансичухлĕ сахалрах. Вакансисем пурри пирки районти 34 ĕç паракан информаци тăратнă.

Чăваш Республикинче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерме пулăшас тĕллевпе 2011 – 2013 çулсем валли йышăннă тĕллевлĕ ведомствăлла программăпа килĕшÿллĕн кăçалхи январь – октябрь уйăхĕсенче 1042 çынна вăхăтлăх тата яланлăх ĕç вырăнĕпе тивĕçтернĕ. Вăл шутран 98 çынна обществăлла ĕçсене пурнăçлама явăçтарнă, 14 çултан тытăнса 18 çулчченхи çул çитмен 670 çамрăка вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă, ĕç тупайманнисене 6 çынна ĕçе вырнаçтарнă, районти 20 çынна Раççейăн ытти регионĕсенче ĕç вырăнĕпе тивĕçтернĕ.

Професси пĕлĕвĕ илме 39 çынна вĕренме янă. Вăл шутран 27-шĕ ĕççĕррисем, виçĕ çул тултарман ачаллă тата ача пăхса пурăнма паракан отпускри хĕрарăмсем 12-ĕн.

Ĕç рынокĕнчи кăткăслăх шайĕ (ăна ĕçпе тивĕçтерекен центра учетра тăракансен шучĕ пĕр вакансии пуçне мĕн чухлĕ тивнине шутласа палăртаççĕ) 0,22 чухлĕ.

Çĕнĕлĕх

## Мăшăрланасси пирки заявлени панă чух

ЗАГСа мăшăрланасси çинчен заявлени çырма пырас тесе çамрăксем ĕçсене отгул пама ыйтаççĕ е вĕренÿ занятийĕсене сиктермелле пулса тухать. Отгул илме май çук пулсан алă пуснине нотариус патĕнче çирĕплетмелле пулнă. Куншăн укçа тăкакламалла.

Халĕ вара, «Об актах гражданского состояния» Федераллă саккуна улшăнусем кĕртнĕ хыççăн, асăннă заявление çырма пулас мăшăртан пĕри килни те çителĕклĕ. Çакăн пек майлашăнас тесен вара теприн порталти «Личный кабинет» урлă заявление электронлă майпа ярса памалла. Нотариус патĕнче алă пуснине çирĕплетмелле мар, апла – тăкакланмалла мар.

Мăшăр уйрăласси çинчен заявлени çыраssине те мăшăр хушшинче икĕ енлĕ килĕшÿ пулсан çак майпах тума пулать.

Çакăн пек правăпа усă курас тесен «Ростелекомăн» сервис центрĕнче (Шупашкар хули, Гагарин урамĕ, 20 а çурт, тел.: 57-15-15, 62-62-11) пĕрлĕхлĕ портала кĕмелли код илмелле, «Личный кабинет» йĕркелесе ямалла. Кун хыççăн пур ведомство услугисемпе те электронлă майпа усă курма пулать.

**Н. КОРНЕЕВА,**
**район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхĕ.**

Саламлатпăр



Катькас ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – **Юрий Иванович ЕФРЕМОВА** 70 çул тултарнă ятпа тата унăн мăшăрне **Елена Николаевна ЕФРЕМОВĂНА** 65 çулхи паллă кунĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăçăн анлă çулне утса тухма юман пек çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Салампа: хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем, тăванĕсем.**

Сумлă юбилей ячĕпе Уйкас Янасал ял тăрăхĕн администрацийĕнче тĕп эксперт специалисчĕ пулса нумай çул вăй хурса ĕçлекен **Аполлинария Ивановна БУЛАВКИНĂНА** чун-чĕререн саламлатпăр. Эсир çак ĕçре нумай-нумай çынна пулăшатăр, тĕрĕс утăмсем тума хистетĕр. Эпир сире ырă сунса сирĕнпе мухтанатпăр, çирĕп сывлăх, вăй-хăват сунатпăр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Саламлаканĕсем: ĕçтешĕсем, Васкассинчи информаципе культура центрĕн ĕçченĕсем, Васкассинчи сыхăну уйрăмĕнче ĕçлекенсем, ял тăрăхĕн депутачĕсем, ял тăрăхĕнче пурăнакансем.**

# Отчетпа суйлав конференцийĕ иртрĕ

Хĕрарăмсен канашĕнче

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче районти хĕрарăмсен канашĕн отчетпа суйлав конференцийĕ иртрĕ. Кунта пухăннисем чи малтанах тури чăвашсен музейĕнче пулчĕç, вĕсене Н. Захаров экспозицийĕ кĕтрĕ. Çавăн пекех Муркашри районти ача-пăча тĕп библиотекинче ĕçлекен «Надежда» консультаципе методика цетрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Конференци ĕçĕ асăннă библиотекăри вулав залĕнче пулчĕ. Унта ял тăрăхĕсенчи канаш ертÿçисем, делегатсем, район администрацийĕн тата республика представителĕсем хутшăнчĕç.

Хĕрарăм – кун-çул тыткăчи, çемье телейĕпе ăшшине упраканĕ. Çавна май вăл ĕмĕр тăршшĕпех пурнăçа шайлаштарса хăтлăх кĕртме тăрăшать. Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа районти хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи А. Андреева калаçрĕ, виçĕ çул хушшинче пурнăçланă ĕçпе паллаштарчĕ.

Тĕрлĕ ыйту татса парассинче асăннă канаш тÿпи пысăк. Йывăр çемьесем те пирĕн хушăра йышлансах пыраççĕ. Çавна май вĕсенчи лару-тăрăва шайлаштарасси – кулленхи тимлĕхре.

Отчетпа суйлав конференцийĕнче канашăн çĕнĕ ертÿçине суйларĕç.

– Хорнуй ял тăрăхĕнчи пĕр хĕрарăм патшалăх сĕнекен тивĕçлĕ пулăшупа, ача пособийĕпе, усă курмасть, документсем те йĕркелемен. Эпир ăна пулăшас тĕллевпе тивĕçлĕ органсене явăçтартăмăр. Çакăн йышши пулăмсем татах та пур. Çавăнпа та тĕрлĕ йывăр лару-тăрурисене пирĕн асăрхасах тăрасчĕ, тĕрĕс çултан пăрăнма парас марччĕ, сывă пурнăç йĕркишĕн ытларах тăрăшасчĕ, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ, çавăн пекех районти хĕрарăмсен канашĕн çĕнĕ ертÿçи Л. Тарасова.

Сывă пурнăç йĕркине вара канаш ертÿçисем чăннипех те тытма тата çак ĕçе ытларах та ытларах çынна явăçтарма пĕлеççĕ. Кунта камран тĕслĕх илмелли пурах.

– Тĕслĕхрен, эпир пысăк йышпа хĕлле йĕлтĕрпе, çунашкапа вăрмана çитиех ярăнма каятпăр. Тĕрлĕ мероприятие ватти-вĕтти хаваспах хутшăнать. Ăрусем пĕрле пухăнни, çынсен пушă вăхăтне тĕрĕс йĕркелени питĕ кирлĕ. Çакă усал йăларан писме, ырри патне явăçма пулăшать, – терĕ Муркаш ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи Р. Аксендарова. Çавăн пекех сывă пурнăç йĕркишĕн тăрăшассинче Шетмĕпуçсем те тĕслĕхре.

Хĕрарăмсен канашĕ обществăлла организаци шутланать. Апла пулин те вăл тĕрлĕ марафон, акци йĕркелет. Сахал тупăшлă, йывăр шăпаллă çемьесем валли тĕкĕ пулса тăрать. Акă республикăри хĕрарăмсен канашĕ 400 пин тенкĕлĕх грант илме тивĕçрĕ. Çак укçана инвалид ачасене реабилитацилес ĕç валли уйăрнă. Шел пулин те, çакăн пек категори пирĕн хушăра йышлансах пырать. Çапла вара хĕрарăмсен канашĕ пĕрлехи тăрăшулăхпа пысăк ĕç пурнăçлать.

Ĕçре палăрнисем тĕрлĕ шайри Тав çырăвĕсене, ытти хисепе тивĕçрĕç.

– Сирĕн тăрăшулăхăр кашни ĕçрех аван курăнать. Эсир, хĕрарăмсем, чăннипех те пысăк хисепе кăна тивĕç. Эсир пулсан çемье тĕреклĕ, ача-пăча телейлĕ, таврара хăтлă. Эсирех çуртăн тăватă кĕтесне тытса тăратăр, – терĕ конференцие хутшăнакансене район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан В. Ананьев.

Конференцие хутшăннисем çавăн пекех республикăри хĕрарăмсен съездне кайма сакăр делегат тата районти канашăн çĕнĕ йышне суйларĕç, ытти ыйту тавра калаçрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2012 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнчи 907 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Виталий Алексеевич ЗАМЯТИНА**, «Свобода» хуçалăхăн 1-мĕш номерлĕ строительство бригадин строительне;

– **Таисия Михайловна НИКИТИНĂНА**, Ильич яч. хис. хуçалăхăн кладовщикне;

– **Виталий Порфирьевич ЦВЕТКОВА**, Чапаев яч. хис. хуçалăхăн механизаторне.

2. Сывлăх сыхлавĕн сферинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн – **Иван Михайлович ЯРДЫКОВА**, районти тĕп больницăн анестезиолог-реаниматолог врачне.

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнчи 940 № йышăнăвĕпе Оринин шкулĕн историпе обществознани учительне **Николай Давыдович ИВАНОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Следстви комитетĕнчен

## Пĕчĕк ача пурнăçĕ татăлнă

Пĕр çулчченхи ачана уйрăмах пысăк тимлĕх кирлĕ, унăн вăй-халĕ çирĕпленме ĕлкĕреймен-ха. Акă пĕчĕк ывăл амăш ăшшипе лăпкăн тĕлĕрнĕ, анчах та пĕчĕкскер амăшĕн кĕлетки айне пулнă та текех вăранайман. Халĕ ку тĕлĕшпе следстви ĕçĕ пырать.

## Ашшĕ илсе кайнă

Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн дежурнăй чаçне пĕр хĕрарăм шăнкăравланă. Вăл унăн ывăлне ашшĕ ирĕксĕрех паллă мар вырăна илсе кайни пирки пĕлтернĕ. Ку тĕслĕхре преступлени факчĕ çуккине тĕпе хурса уголовлă ĕç пуçарассине пăрахăçланă.

**И. ФЕДОТОВ,**
**аслă следователь.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

## «Шанчăк телефонĕ» ĕçлет

Полици сотрудникĕсем ĕçе епле пурнăçланипе эсир кăмăллă е сире вĕсен ĕç пахалăхĕ килĕшмест? Тен сирĕн пĕр-пĕр сотрудника тав тума сăлтав пур? Тен эсир тата урăх тĕрлĕ информаци пĕлетĕр? Çак тата ытти ыйтусене Шалти ĕçсен министерствин пирĕн республикăри «шанчăк телефонĕн» номерĕсемпе шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр:

24-16-55 – дежурнăй чаçе – пулнă е тума хатĕрлекен преступленисем, йĕркене пăсни пирки пĕлтерме;

62-50-30 – çул-йĕр хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе;

24-18-03 – экономика преступленийĕсем тата коррупци пирки;

24-11-24 – полици сотрудникĕсем саккунлăха е йĕркене пăсни пирки;

24-07-07 – тĕрлĕ шайри служащисен, сотрудниксен коррупци çыхăнăвĕсем тата преступленийĕсем пирки.

Пирĕн районта та халĕ хамăрăн «шанчăк телефонĕ» ĕçлет. Унăн номерĕ: 63-1-11. Йĕркеллĕ обществăра пурăнас тесен йĕрке тăвассине пурин те хутшăнмалла. Апла – шăнкăравлăр.

**ШĔМĕн районти пайĕ.**

# Хĕрарăм укçа çухатнă

Прокуратурăран

Полици ĕçченĕсем патне тăтăшах тĕрлĕ сăлтавпа шăнкăрав килет – кашниех пулăшу, çăлăнăç кĕтет. Çав хушăрах хăш чухне эрех ĕçсе ÿсĕрĕлнисем хăйсен ултавлă пĕлтерĕвĕсемпе йĕрке хуралçисен хаклă вăхăтне сая яраççĕ, çапла вара вĕсен ĕçĕнче пысăк чăрмав кÿреççĕ: шăнкăрава йышăнмалла, регистрацилемелле, тĕпчев-шырав ĕçĕ ирттермелле.

Акă пĕр ялти хĕрарăм шăнкăравнех илер-ха. Улькка (ятне улăштарнă) кинемей çыхăну уйрăмĕнче пенси укçи çичĕ пин те сакăр çĕр тенкĕ илчĕ. Паллах, куншăн савăнмалла, ара ăна вăл чăннипех те тивĕçнĕ вĕт, çамрăклăх çулĕсенче ырми-канми тăрăшнă. Çапла вара укçа саланса кайиччен тесе кинемей коммуналлă услугăшăн тÿлерĕ, апат-çимĕç туянчĕ. Кĕсье самай çÿхелчĕ, виçĕ пин те тăват çĕр сакăрвунă тенкĕ юлчĕ. Тирпейлĕ тытма пĕлсен унпа тепĕр уйăхчен пурăнма пулать-ха.

Алăри сумка çăмăлах мар иккен, хайхискер хăйне пулăшу кирлине туйрĕ. Улькка кинемей хăйсен ялĕнчех пурăнакан çынна çĕклеме йăтса пыма ыйтрĕ. Епле-ха пулăшмăн ырă çынна?

Улькка пÿрте кĕрсен куртка кĕсйинчи укçана пысăк пÿлĕмри сĕтел çине кăларса хучĕ. Хăй вара эрех черкки пуштарĕ те кăтăш пулчĕ. «Симĕс çĕлен» хăйĕннех тăвать çав, пулни-иртнине те манăçтарать. Сывăрса тăчĕ-ха, анчах ăш-чик каллех хаяррине кĕтет иккен. Çапла вара вăл хаяр шĕвек туянса кăмăл-туйăмне лăплантарма шухăшлать, апла пулсан укçа кирлĕ. Ак тамаша, куртка кĕсйи пуш-пушах. Пĕр тăхтамасăр Улькка кинемей полици ĕçченĕсем патне шăнкăравлать.

– Манăнне укçа вăрланă, хăвăртрах килсе тупса парăр! – çакăн пек пĕлтерĕве йышăнаççĕ октябрĕн 22-мĕшĕнче йĕрке хуралçисем.

Полици ĕçченĕсем – йĕрке хуралçисем, вăрă-хураха тытакансем, инкек-синкекрен хăтаракансем. Çавна май вара вĕсем инкек тÿснĕ çынна нумай кĕттермерĕç. Хăй вара унта-кунта шырама, пăхма та ÿркенет, килсе тупса парасса кĕтет. Мĕн тетĕр, ĕç ушкăнĕ çухалнă укçана пĕр самантрах тупса пачĕ. Ăна шырама та тивмен иккен, виçĕ пин те икçĕр тенкĕ пысăк пÿлĕмри сĕтел çинчех, Улькка кинемей маларах хунă вырăнтах пулнă.

– Ÿсĕр пулнă, ăста хунине манса кайнă. Çухалса кайнипе сирĕн пата шăнкăравларăм, – терĕ вăл хăй айăплă пулнине пĕлтересе.

Çапла вара шырав-тĕпчев ĕçне Улькка кинемей заявленине тĕпе хурса пăрахăçлама тиврĕ. Çапах шутласа пăхăр-ха, мĕн чухлĕ чăрманма тата тăкакланма тиврĕ ку тĕлĕшпе? Ятарлă ушкăн автотранспортпа килсе кайрĕ, çак хушăра вĕсем чăннипех те тепĕр çĕрте кирлĕрех те пулма пултарнă. Çак пулăма çăмăлттайлăх тесе хакламалла е урăхла асăнмалла?

Ултавлă ĕç тапхăрĕ вăрăм, полици ĕçченĕсем патне шăнкăравланинчен пуçласа прокуратура ĕçченĕсем таранах. Çавăнпа та район прокуратури асăрхаттарать, тимлĕрех пулма тата харпăр хăй вăхăтне кăна мар, ыттисенне те хаклама ыйтать.

**Р. МАКАРОВА.**

Ял тăрăхĕсенче

## Лару иртнĕ

Октябрĕн 26-мĕшĕнче депутатсен Ярославка ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсен черетлĕ 19-мĕш ларăвĕ иртнĕ. Пухăннă депутатсем чи малтанах Ярославка ял тăрăхĕн Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси пирки ыйту сÿтсе явнă. Асăннă улшăнусемпе хушăмсем Ярославка ял тăрăхĕн Уставне вăйра тăракан законодательствăпа килĕшÿллĕн йĕркелессипе çыхăннă. Депутатсем паянхи кун йĕркинче тăракан ытти ыйтусем пирки те канашланă.

## Арçын ачасем вĕçме ĕмĕтленеççĕ

Ачалăх – романтикăллă вăхăт. Ку вăхăтра кашни арçын ача вĕçме ĕмĕтленет. Çакна ырламалла кăна. Юнкă шкулĕнче акă авиамоделировани кружокĕ ĕçлет. Шкул ачисем Юрий Самушков ертсе пынипе вĕçекен аппаратсем ăсталаççĕ. Юрий Николаевич – пултаруллă наставник. Кружока çÿрекенсем районти тата республикăри ăмăртусенче çуллен малти вырăнсене йышăнаççĕ. Хăвăн алăпа ăсталанă самолет сывлăша çĕкленнине, хитрен вĕçнине курсан камăн чунĕ хăпартланупа тулмĕ-ха! Çавна май кружока çÿренисенчен хăшĕсем шкултан вĕренсе тухсан та çак туйăма çухатмаççĕ.

Ку вĕренÿ çулĕнче Юрий Николаевич çĕнĕрен кружока çÿрекен ачасемпе занятисем ирттерме тытăннă. Юратнă ĕçе чунне пама тăрăшать вăл. Тăваттăмĕш класа çÿрекен Иван Романов, Даниил Шурнеев тата Никита Селюшкин вĕçекен аппаратсем ăсталассипе уйрăмах кăсăкланаççĕ. Апла пулсан вĕсем ĕмĕтленни пурнăçланатех, сывлăша çĕнĕ аппаратсем çĕкленĕç, малашне те çĕнĕ çитĕнÿсем пулĕç.

## Хĕрарăмсем – пысăк вăй

Юнкă ял тăрăхĕнче хĕрарăмсен канашĕн отчетпа суйлав пухăвĕ иртнĕ. Пухăва уçнă май ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Фомин хĕрарăмсем ял тăрăхĕн экономикăпа социаллă ыйтăвĕсене татса парассинче пысăк вăй пулса тăнине палăртнă. Канаш чунĕсемпе çунса тăракан, пĕр-пĕрне яланах пулăшма хатĕр çынсене пĕрлештерсе тăрать. Ку вара паянхи çăмăл мар пурнăçра пушшех те пĕлтерĕшлĕ.

Хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Валентина Егорова хĕрарăмсен унчченхи канашĕ туса ирттернĕ ĕçсем çинче чарăнса тăнă, ачасен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комисси ларăвĕсене хутшăнни, ăнăçсăр çемьесене тухса çÿрени, массăллă мероприятисене йĕркелесе ирттерме хутшăнни пирки каласа панă. Çапах та çак ĕçсене çителĕксĕртерех тесе палăртнă.

Пухура хĕрарăмсен канашĕн çĕнĕ йышне суйласа хăварнă. Канаша ертсе пыма пĕр саслă пулса Лариса Толстовăна шаннă. Пухăва хутшăннисем çĕнĕ канаша хăйĕн ĕçне активлăлатма, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе, ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕпе, ашшĕ-амăшĕсен комитечĕпе тачăрах çыхăнса ĕçлесе пыма сĕннĕ.

Хĕрарăмсем умри проблемăсене татса парассипе çемьесемпе шкула пулăшу памалли мелсене усăмлатнă, ыр кăмăллăх акцийĕсем ирттересси, медицина ĕçченĕсемпе тата библиотекарьсемпе тĕрлĕ темăсемпе информаци сехечĕсем йĕркелесси пирки те сÿтсе явнă.

## Хамăр сывлăхшăн хамăр яваплă

Ачаранах пурнăçра çирĕп позици йышăнни, пиçĕхни, спортпа туслă пулни, харпăр хăйĕн гигиена нормисене тытса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Москакасси библиотекинче «Эпир сывă пурнăç йĕркишĕн» акцие хутшăнса «Сывлăхлă вулакан кунне» ирттернĕ. Унăн тĕллевĕ – сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси.

Библиотекăра «Санăн сывлăху – хăвăн аллунта» ятпа кĕнекесен выставкине йĕркеленĕ. Унта сывлăх, ачасене сывлăхлă пăхса ÿстересси, воспитани парасси, сывлăхлă кану, чир-чĕрсемпе сиенлĕ йăласен профилактики пирки кĕнекесем кăтартнă. Сăмахран, «Книга о здоровье детей», «Воспитываем детей здоровыми» кĕнекесенчен ачасен ашшĕ-амăшĕсем, педагогсем ку е вăл ыйтупа конкретлă сĕнÿсем илме пултараççĕ. Кунпа пĕрлех эрне хушши вулакансем пирус туртнин, эрех ĕçнин тата наркотиксемпе усă курнин сиенĕ пирки видеоклипсем пăхма пултарнă.

Сиенлĕ йăласенчен асăрханмалла. Хамăрăн дисциплинăллă пулмалла, хăмăрăн сывлăх пирки хамăрăн шухăшламалла. Мĕншĕн тесен хамăрăн сывлăх – хамăр алăра. Çакăн пек пĕтĕмлетÿ тума пултарнă вулакансем.

## «Кĕркунне – улшăнусен вăхăчĕ»

Çак ятпа Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Васкассинчи Культура çуртĕнче ташă каçĕ йĕркеленĕ. Ăна информаципе культура центрĕн директорĕ Н. Ильина ертсе пынă. Çулталăкĕпе тăрăшса ĕçленĕ хыççăн канма та юрать. Ку енĕпе вара Шупашкартан килнĕ ташă ушкăнĕ – «Golden Flash» шоу-балет пысăк пулăшу панă. Яш-кĕрĕм савăнăçлă каç валли хатĕрленĕ конкурссене хаваспах хутшăннă. Кĕркунне рольне Оля Павлова ăнăçлă сăнланă.

Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн дежурнăй ушкăнĕ эрнесерен массăллă мероприятисем ирттерекен Культура çурчĕсене тухса рейдсем йĕркелет. Çав кун вĕсем Васкассинче те пулнă. Вĕсем кану касне мĕнле йĕркеленипе кăмăллă юлнă. Мĕншĕн тесен йĕркелĕхе тивĕçтерессипе асăннă мероприятие ашшĕ-амăшĕсемпе учительсен патрулĕсем, вырăнти депутатсем, çамрăксен тата хĕрарăмсен канашĕсен членĕсем те хутшăннă.

**Ял тăрăхĕсен сайчĕсенчи информацисене пухса В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

# Тӗслӗх илмелли хамӑрпа юнашарах

**Ял хуҫалӑх техникине – хӗллехи управа**



**«Путь Ильича» агрофирмӑн ӗҫ тӑвакан директорӗпе В. Вязовпа ЧР хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тата ытти тӗрлӗ машинӑсене тӗрӗслесе тӑракан патшалӑх инспекцийӗн ертӳҫи В. Димитриев техника управӗ тӗлӗшпе кашни ыйту ҫинчех тӗплӗн чарӑнса тӑчӗҫ.**

Хура кӗр кунӗсем тӑраҫҫӗ пулин те, ӗнерхи техникӑн ыран та ӗҫлемеллине ӑнланакансем паян та машинӑпа трактор паркӗсенчен кӗменха. Техникӑна упрани пус ҫумне пус хушассипе пулакан кулленхи чӑнлӑха тӗпе хурса иртет те ӗнтӗ ял хуҫалӑх техникине хӗллехи управа лартассипе ҫуллен пулакан смотр-конкурс.

Хӑвӑрт аталанакан пурнӑҫра пурӑнатпӑр. Ӗлӗкех те мар ял хуҫалӑхне механизацилесси пирки хытӑ калаҫатчӗҫ, ҫыврӑкансене ҫӳллӗ трибунӑсем ҫинчен питлетчӗҫ. Кайран ҫерем ҫӗрсем уҫрӑмӑр, пусӑ ҫаврӑнӑшне тата агротехнологисене пӑхӑнса тыр-пул тухӑҫне 30–40 центнера, ҫӗр улми тухӑҫне 200–300 центнера е ытлараха та ҫитертӗмӗр т. ыт. те. Анчах мӗн тунипе лӑпланни каялла утӑм туниех. Ҫакна пурте пӗлетпӗр. Хальхи вӑхӑтра кахал ҫын ҫеҫ хӑйӗн хуҫалӑхӗнче ҫӗнӗ технологисене тата энерги перекетлекен техникӑна ҫул парассипе ӗҫлемест, вӗсене пурнӑҫа кӗртсе ҫӗнӗ ӳсӗм картлашкисем тумасть. Анчах хура кӗркуннепе хӗл чиккине ҫитнӗ май ял хуҫалӑх техникине хӗллехи управа лартнине тӗрӗсленӗ чух час-часах ҫӑкӑр тума пулӑшакан техника ҫине алӑ сулни те куҫ умне пулать. Ҫак киревсӗр енсем вӑй ан илччӗр тесе ЧР Ял хуҫалӑх министерствипе республикӑри хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тата ытти тӗрлӗ машинӑсене тӗрӗслесе тӑракан патшалӑх инспекцийӗ пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсем тӗлӗшпе пысӑк калӑпӑшлӑ ӗҫсем туса ирттерет.

Чӑваш Республикинчи хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тата ытти тӗрлӗ машинӑсене тӗрӗслесе тӑракан патшалӑх инспекцийӗн ертӳҫи В. Димитриев иртнӗ кунсенче ӗҫлӗ ҫул ҫӳревпе районти хуҫалӑхсенче пулса курчӗ. Машинӑпа трактор паркӗсене ҫитсе курнӑ май Владимир Павлович чӑн малтанах кӑҫалхи ял хуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленсе пынӑ май ҫитес ҫулхи ӗҫ-хӗл пирки те паянах шухӑшламаллине палӑртрӗ.

– Республика Пуҫлӑхӗ М. Игнатьев ял хуҫалӑх бизнесне аталантарма майсем пуррине палӑртсах тӑрать. Ҫакна валли вӑл пурнӑҫа кӗрекен ҫӗнӗлӗхсенчен ҫыврӑса юлмасӑр ӗҫлеме чӗнсе калани аслӑ асаттесем кая юлсан каю шӑтать тесе асӑрхаттарнипе тӳр килет. Пурнӑҫ аталанӑвне тивӗҫлӗ шайра тытма, кунҫул уттипе тан пыма эпир кашниех ҫӗнӗлӗхсем выранли пирки, вӗсене пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшмалли таврӑнакан техникӑна та ҫийӗнчех управа лартассине кунта ырана хӑвармасӑр пурнӑҫламалли ӗҫсем тесе вӑй хунӑ.

– Техникӑна хӗллехи управа лартассипе ӗҫ условийӗсене эпир малтанах палӑртса. Ҫавӑнпа та вӗсене пурнӑҫламасӑр кӗрхи уй-хир ӗҫӗсем вӗҫленменнине кашни механизаторах пӗлсе. Ҫавӑнпа та агрофирмӑн тӗп инженерӗ Геннадий Феликсович ертсе-йӗркелесе пынипе техникӑна хӗллехи управа лартассипе пирӗн ӗҫченсем пӗр сехет те сая ямарӗҫ. Тавах вӗсене куншӑн, – палламтарчӗ тасатса-сӑрласа тата ӗҫлев органӗсене витсе-пушатса управа лартнӑ техника хатӗрӗсен речӗсемпе иртсе пынӑ агротехнологие пӑхӑнса вӑй хума, тупӑш илме пулать. Ҫакӑнта тымарланнӑ та ӗнтӗ вӑл ӗҫ тухӑҫӗ», – техника паркне ҫӗнетессипе епле ӗҫленипе паллаштарнӑ май калаҫать Г. Шарапов тӗп инженер.

«Путь Ильича» агрофирма – паян районта чи тӗрек аталанакан хуҫалӑх. Пур ҫӗрлӗ хуҫаланакан тирпейлӗхпе ӗҫ тӗлне пӗлни те, ҫӗнӗлӗхсене тӑтӑш алла илсе пыни те, паянхи укҫа-тенкӗне шутласа ыранхи кунпа пурӑнни те – кунта кашни утӑмрах тӗл пулакан ӳкерчӗксем.

21-мӗш ӗмӗрте пурӑнатпӑр та техника пӗлтерӗшӗ ӳссех кайрӗ. Энерги перекетлекен техника туянасси тата унпа тухӑҫлӑ усӑ курасси – ҫӗр



ҫинчен калаҫатпӑр. Калаҫатпӑр та... Пирӗн сӑмахсем чылай чух чул ҫине мар, юр ҫине ҫеҫ юлаҫҫӗ. Мӗн ҫуккине тумалла, пуррине – упрамалла. Ӗҫри ҫак чӑнлӑха кӗрхи ӗҫсем вӗҫленнӗ май хуҫалӑхсенче ял хуҫалӑх техникине хӗллехи управа лартнине тӗрӗслеме тухсан яр уҫҫӑнах курма пулать, – терӗ вӑл «Путь Ильича» агрофирмӑн машинӑпа трактор паркне ҫитсен. Кунта комисси членӗсем хуҫалӑхӑн ӗҫ тӑвакан директорӗпе В. Вязовпа тата тӗп инженерӗпе Г. Шараповпа тӗл пулса калаҫрӗҫ. Хорнуйсем техника управӗ ҫине чӑнласах пысӑк тимлӗх уйӑрни яр уҫҫӑн курӑнчӗ. Хуҫалӑх хӑйӗн уй-хирӗсенче кӗрхи ӗҫсене вӗҫленӗ. Парка май Валерий Иванович.

Кашни ӗҫӗн вӑхӑчӗ пур. Ҫакна «Путь Ильича» агрофирмӑра кашниех ӑнланса ӗҫлени курӑнать. Машинӑпа трактор паркӗнче кӑҫал пурнӑҫланӑ калӑпӑшлӑ ӗҫсем пӗр ҫын пурнӑҫланисем мар. Хыҫа юлса пыракан ял хуҫалӑх ҫулӗ те кӑҫал хресченӗн тӑрӑшулӑхне ҫивӗч тӗрӗслерӗ: ҫӗр ӗҫченӗн кӗрхи нумай ӗҫсене ҫумӑрлӑ ҫанталӑкпа кӗрешсе пурнӑҫлама тиврӗ. Техника ҫине тимлӗ пӑхакан агрофирма ӗҫченӗсем вара йӗпесапа тесе алӑ усса лармарӗҫ. «Ҫавӑнпа та кӑҫал ӗҫленӗ ял хуҫалӑх техники ҫитес ҫул та хамӑрах кирлӗ пулнине ӑнланса ӗҫлерӗмӗр. Юсавлӑ та ӗҫе хатӗр техникӑпа ҫеҫ ӗҫченӗн паянхи тӗллевӗ. Ҫак ырӑ тӗллеве «Путь Ильича» агрофирмӑра куллен пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Ҫӗнӗ техника туянакан хуҫалӑх вӗсене пӗрремӗш кунранах типтерлӗ упрасси ҫине те тимлӗх уйӑрать. Хуҫалӑх паркӗнче ҫакна валли бетон плитасем сарса техника вырнаҫтарма ятарлӑ лаптӑксем хатӗрлени те хуҫалӑхра паянхи кунпа ҫеҫ пурӑнманнине ҫирӗплетрӗ.

Ҫӗнӗ техника тенӗрен. Пирӗн район машинӑпа трактор паркне ҫӗнетессипе республикӑра кӑҫал 3-мӗш вырӑнта. Муркаш енре вара ҫӗнӗ техника туянассипе «Путь Ильича» агрофирмӑна ҫитекенни курӑнмасть-ха. Район кӑҫал 51 миллион ытла



тенкӗлӗх ял хуҫалӑх техники туяннӑ пулсан, ҫурри – Хорнуйсемпе Мӑн Шаптаксен харпӑрлӑхӗнче. Вӗсем: «Акрос-580» комбайн, «Версатил-305» трактор, «СЗП-3,6» сеялка, «БДМ-4ПК» дискатор, ятарлӑ ҫурма прицеп, пресс-подборщиксем, тӑпрана тарӑн кӑпкалатакан агрегат т. ыт. те. Паян вӗсене пурне те управа тирпейлӗ вырнаҫтарса тухнӑ. Урамра ларакансем те, ангарсене вырнаҫтарнисем те паян ГОСТпа килӗшӳллӗн типтерлӗ управра лараҫҫӗ **(сӑн ӳкерчӗксенче)**. Хура кӗр иртсе пынӑ май ырри хамӑрпа юнашарах пулнине «Путь Ильича» агрофирмӑра хамӑр куҫпа курса ӗнентӗмӗр.

...Чӳк уйӑхӗ пырать. Ир-каҫ ҫӗр самаях шӑнни, сывлӑшра час-часах «шурӑ шӑнасем» явӑнни, кун кӗскелнӗҫемӗн кӗскелни – йӑлтах хӗл ҫывхарӑвӗн паллисем. Куллен ҫӗнӗ техника туянма ҫӗр ӗҫченӗн вӑй ҫитсех кайманнине ӑнланса хамӑрӑн мӗн пуррине тӗплӗнрех упрама тӑрӑшасчӗ. Техникӑна вӑхӑтра юсасан тата типтерлӗ упрасан унӑн ӗмӗрне самай тӑсма май килнине, ҫак ҫулпа пыни хуҫалӑх экономикине тӗкӗ панине ыранхи кунпа пурӑнакан ҫӗр ӗҫченӗ ӑнланать. Ӑна тӗпе хурса малашлӑх планӗсене ҫирӗплетет вӑл. Ҫапла, ӗҫлекен ҫын маларлах пӑхать, пурнӑҫпа тан пыма ҫӗнӗлӗхсене алла илнипе пӗрлех перекетлӗх пирки те манмасть.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**районти патшалӑх техника надзорӗн инспекторӗ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаҫачӗн ял хуҫалӑх пайӗн ертӳҫи.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

**Пулни-иртни**

# Шӑл мыскари, е ГАИшник «чике тӑршшӗ» лартрӗ

(Водитель каласа панинчен)

Чӑн та, уявсем тенӗрен, вӗсем паянхи пурнӑҫра сахал мар. Календаре уҫса пӑх кӑна. Хӑть те хӑш кун уяв ячӗпе тесе черкке ҫӗкле – йӑнӑшмастӑн, мӗнле те пулин уява е паллӑ куна «ҫакланатӑнах». Анчах та юбилей вара ҫыннӑн кашни кун пулакан япала мар. Ҫавна май кирек кам та ӑна асра юлмалла, савӑнӑҫлӑ ларутӑрура, ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл-туйӑмпа иртterme тӑрӑшать.

Мӑшӑрӑн юбилейне паллӑ турӑмӑр. Паллӑ ӗнтӗ, хӑна-вӗрлесӗр мар. Чылайӑн пухӑнчӗҫ. Хамӑр патрисем кӑна мар, хулара пурӑнакансем те юбилее ҫитме кӑмӑл турӗҫ. Ӗҫмелли-ҫимелли те сӗтел туллиех пулчӗ.

Юбилей юбилей те, хӑнасене пӑхасси пирки те манма юрамасть. Ҫавӑнпа та алла лекнӗ кашни черккенех тӗплеме тӑрӑшмарӑм. Апла пулин те хӑнасем саланма пуҫланӑ ҫӗрелле пуҫ анкӑ-минкӗ пулса кайрӗ. Тӗрӗссипе хам та ытлашши шикленмерӗм: умра – шӑмат кунпа вырсарни кун. Тунти кун кӑна ӗҫе тухмалла. Сӗвӗрӗлмелӗх вӑхӑт пур.

Тепӗр кунне ирпе алӑка шаккакан тупӑнчӗ. «Тахӑшӗн ӗнерхи хыҫҫӑн мухмӑр касса килнӗ пулӗ ӗнтӗ»,– шухӑшлатӑп хам ӑшра. Алӑк умӗнче кӳршӗри Петӗр тӑрать.

– Мӗн, ярса памалла-и? – ыйтатӑп ҫаксертен.

– Каккуй унта, шӑл сурать. Ниҫта кайса кӗме май ҫук. Ҫӗрӗпе те ҫывӑраймарӑм, – хуравлать мӗскӗннӗн кӳршӗ. – Район центрне шӑл тухтӑрӗ патне ҫитмеллеччӗ. Леҫсе хӑвар-ха автомашинупа?

– Хӑвах пӗлетӗн вӗт ӗнер самай сыпнине. Мухмӑр шӑрши перет. Кун пек чухне руль умне ларма юраманнине пӗлместӗн мар, – ӳкӗте кӗртме тӑрӑшатӑп кӳршӗне.

Вӑл вара хӑйӗннех перет. Ниепле те ӳкӗте кӗмест. «Ӗмӗрте пӗрре ыйтрӑм пулӗ те, ҫапах пулӑшасшӑн мар», – тет. Апла та калаҫса пӑхатӑп, капла та – майӗ ҫук. Ӗмӗрлӗх ҫилленессипе хӑратать. «Эп вара сана нихӑҫан та усӑ туман-ши?» – тет.

Аптӑратсах ҫитерчӗ Петӗр. Мӗн тумаллине те пӗлместӗп. Те кайсан лайӑх ӗнтӗ, те каймасан. Кайма пулӗ-ха. Ҫул ҫинче ГАИ сотрудникӗсем тытса чарсан вара? Эрехне ирхине сыпман пулин те, мухмӑр шӑрши кӗретех вӗт.

Кӳршӗпе харкашса-ятлаҫса пурӑнма май ҫук, мӗн пулать те мӗн килет тенӗ пек, килӗшмех тиврӗ. Тен сӑлтавсӑрах ҫиллентеретӗп кӳршӗне. Ҫулӗ инҫе мар. Шӑп та лӑп ҫав вӑхӑтра ӑҫтан тупӑнччӑр-ха пакунлисем?

Чӑн та, чиперех-йӗркеллех ҫитрӗмӗр район центрне. Автомашинӑна больница патӗнче ҫул хӗррине чартӑм. Петӗр шӑл тухтӑрӗ патне вирхӗнчӗ. Эпӗ вара магнитола ятӑм та ӗнерхи юбилей каҫне аса илсе ларатӑп.

Синкер тени юнашарах ҫӳрет иккен. Автомашина тӗкӗрӗпе пӑхатӑп та, манӑн автомашина хыҫнерех ГАИ автомашини килсе чарӑнчӗ. Ак сана шӑл мыскари. «Анчах темех мар-ха»,– шухӑшлатӑп хам ӑшра. Мана ҫул ҫинче никам та тытса чарман. Эпӗ руль умӗнче ларатӑп кӑна. Тен эпӗ урӑх водителе тара тытса килнӗ кунта. Ытлашши пӑшӑрханма кирлӗ мар.

Тӗкӗрпех сӑнатӑп. Пӗр автомашинӑна чарса тӗрӗслерӗҫ, теприне. «Манӑн вырӑнта хускалмасӑр ларакан автомашина кусене интереслентермест пулас»,– тетӗп. Ҫук иккен. Пӗри ман еннелле ҫул тытрӗ. Пырса сывлӑх сунчӗ, документсене кӑтартма ыйтрӗ. Патӑм. Хам шухӑшлатӑп: мӗншӗн ҫул ҫине мухмӑрла пуҫпа тухнӑ тесе ыйтсанах хурав хатӗр – эпӗ урӑх водителе тара тытса килнӗ район центрне.

Документсем йӗркеллех пулма кирлӗха. Техосмотр вӑхӑчӗ те тухманччӗ, страховкине те тунӑччӗ. Хама вара хӑйӗнпе пӗрле утма ыйтрӗ.

Утас пулать, унсӑр май ҫук. Эпӗ урӑ е урӑ маррине приборпа тӗрӗслессине пӗлтерчӗ. Паллӑ ӗнтӗ, прибор урӑ мар кӑтартать. Ӗнерхи мухмӑр-сухмӑрӗ те тухса пӗтмен, ирхине сухал хырма та ӗлкӗрейменччӗ. Нимӗнле прибор та кирлӗ мар кунта. Мӗнех вара, эпӗ руль умӗнче ларнӑ кӑна вӗт-ха, чӑннипе водителӗ «урӑххи».

Ак тамаша! Кун пекки те пулать-и вара? Прибор урӑ кӑтартать иккен! Мана документсене тавӑрса пачӗ. «Пӗтӗмпех йӗркеллӗ, анчах та автомашину ытлашши ҫул хӗрринче ларать, ыттисене чӑрмав кӳме пултарать. Ав ҫавӑнта кӑшт маларах куҫарса ларт», – тет йӑвашшӑн.

Вӑт савӑнӑҫ. Ун пек пулсан эп автомашинӑна 2–3 метр мар, ҫур километр та маларах куҫарса лартма хатӗр. Автомашинӑна хускатрӑм та вӑл кӑтартнӑ вырӑна куҫарса лартрӑм.

Тата мӗн амакӗ? ГАИ сотрудникӗ татах хӑйӗн патне чӗнет. «Айта-ха сана приборпа тепӗр хут тӗрӗслесе пӑхар», – тет. Тӗрӗслерӗ. «Шел, малтанхи хутӗнче прибор «йӑнӑшнӑ» пулас, ку хутӗнче вӑл эсир урах мар тесе кӑтартать», – ӑнлантарать мана.

Тинех тавҫӑрса илтӗм хама ГАИ сотрудникӗ «чике тӑршшӗ» лартнине. Тин ӗнтӗ автомашинӑпа тепӗр водителе тытса килни пирки ӑнлантарнинчен те пӗр пуслӑх усси ҫук. Автомашинине хамах куҫарса лартрӑм вӗт-ха. Апла пулсан эпӗ ӳсӗр пуҫпа автомашинӑна тытса пынӑ. Пӗтӗмпех саккунлӑ.

Пӗр сӑмахпа, хакла ларчӗ мана Петӗр кӳршӗн шӑл ыратӑвӗ.

**В. ШАПОШНИКОВ ҫырса илнӗ.**

# Яшсем алла повестка илчĕç

Призыв



«Хăвăр Муркашран, Муркаш районĕнчен пулнине ан манăр. Пирĕн район та, район центрĕ те питĕ илемлĕ. Çыннисем те маттур», – çакна шута хума сĕнсе каларĕ районти призыв комиссийĕн председателĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В. Никитин пулас салтаксене.

Çар тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçламалли, ашшĕ-амăшĕсен ятне ямалла марри çинчен темиçе хутах аса илчĕç районти призывниксен кунĕнче. Муркаш районĕнчен паттăрсем чылай тухнă. Вĕсен тĕслĕхĕ те çамрăксемшĕн яланах асра пулмаллине палăртрĕ ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн пуçлăхĕ А. Кочуров.

Республикăри Çар комиссариачĕн, афганецсен пĕрлешĕвĕн представителĕсем те призывниксене ăс парса ăнăçу сунчĕç. Салтак пурнăçĕнчи тĕслĕхсемпе паллаштарса: «Чăн-чăн хỹтĕлевçĕсем, чăн-чăн арçынсем пулăр», – терĕç Афган вăрçи витĕр тухнисем.

Вăрçă, хĕрỹ вырăнсем курмалла ан пултăр çара каякансен. А. Кочуров пĕлтернĕ тăрăх районтан çара каякан 40 ытла яш Раççейĕпех саланĕ. Акă Исетеркккĕри Николай Илларионов **(пĕрремĕш сăн ỹкерчĕкре сулахайра)** Президент полкне кайма юрăхлă республикăри 15 яшран пĕри. Мăн Шаптакри Александр Герасимова **(сылтăмри)** та повестка панă чухне элита çарне лекессине пĕлтерчĕç.



Повестка иличчен малтан вара çамрăксем «Надежда» центрта тренингсене хутшăнчĕç, «Сывлăх» ФСК-ра иртнĕ спартакиадăра вăй виçрĕç. Алăпа туртăнассинче, ишессинче вăй виçрĕç каччăсем. Спорт енĕпе çамрăксем самаях хавшакки курăнчĕ. Пулас салтак икĕ хут кăна алăпа туртăнать (подтягивани) пулсан тата 25 метра аран-аран ишсе тухать пулсан... А. Кочуров танлаштарма илсе кăтартнă цифрăсем район администрацийĕн ларусен залне пухăннă яшсемпе хĕрсене кăшт та пулин шухăшлаттарчĕçех пуль: пирĕн республикăри призыв ỹсĕмĕнчи çамрăксен 60–62 проценчĕ кăна çара кайма юрăхлă, Ингушети, Чечен республикисенче вара – 96–98 процент! Кунсăр пуçне çак республикăсенчи призывниксенчен кашни 2–3-мĕшĕ спортăн пĕр-пĕр енĕпе маçтăр нормативне пурнăçланăскерсем.

Анчах та Муркашсен йышĕнче те маттуррисем пур. Мала тухнисене ФСК директорĕ А. Куликов грамотăсемпе медальсем парса чысларĕ. Районти вĕрентỹ тата çамрăксен политикин пайĕ ячĕпе вара çирĕплĕхпе сывлăх сунса яшсене асăнмалăх парнесем пачĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Автор сăн ỹкерчĕкĕсем.**

## Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене пĕлме

**Райхаçат редакцийĕ «Çĕнтерỹ ялавĕ» хаçатра пичетлеме ял тăрăхĕсен йышăнăвĕсене, хушăвĕсене, çавăн пекех тĕрлĕ пĕлтерỹсене фирма бланкĕ çинче пуçлăх алă пусса çирĕплетнĕ хыççăн çеç йышăнать. Паллах, пĕрле документăн электрон версине те çитермелле.**

**Документсене редакцие çак йĕркепе тăратмалла:**

**юн кунхи номерте пичетлеме – тунти кун 12 сехетрен кая юлмасăр;**

**шăмат кунхи номерте пичетлеме – кĕçнерни кун 12 сехетрен кая юлмасăр.**

УВЕДОМЛЕНИЕ

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» уведомляет юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих земляные работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что по территории района проходят подземные газопроводы, обозначенные железобетонными столбиками и опознавательными знаками, нанесенными на постоянные ориентиры, ориентировочное расположение которых показано на плане (карте) землепользователя и на местности.

Правилами охраны газораспределительных сетей, утв. Постановлением Правительства Российской Федерации от 20 ноября 2000 г. №878, в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны.

В охранных зонах газопроводов запрещается:

а) строить объекты жилищно-гражданского и производственного назначения;

б) сносить и реконструировать мосты, коллекторы, автомобильные и железные дороги с расположенными на них газораспределительными сетями без предварительного выноса этих газопроводов по согласованию с эксплуатационными организациями;

в) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения, предохраняющие газораспределительные сети от разрушений;

г) перемещать, повреждать, засыпать и уничтожать опознавательные знаки, контрольно-измерительные пункты и другие устройства газораспределительных сетей;

д) устраивать свалки и склады, разливать растворы кислот, солей, щелочей и других химически активных веществ;

е) огораживать и перегораживать охранные зоны, препятствовать доступу персонала эксплуатационных организаций к газораспределительным сетям, проведению обслуживания и устранению повреждений газораспределительных сетей;

ж) разводить огонь и размещать источники огня;

з) рыть погреба, копать и обрабатывать почву сельскохозяйственными и мелиоративными орудиями и механизмами на глубину более 0,3 метра;

и) открывать калитки и двери газорегуляторных пунктов, станций катодной и дренажной защиты, люки подземных колодцев, включать или отключать электроснабжение средств связи, освещения и систем телемеханики;

к) набрасывать, приставлять и привязывать к опорам и надземным газопроводам, ограждениям и зданиям газораспределительных сетей посторонние предметы, лестницы, влезать на них;

л) самовольно подключаться к газораспределительным сетям.

При необходимости выполнения земляных работ в охранных зонах газораспределительных сетей Вы обязаны:

- получить письменное разрешение филиала «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» на выполнение работ;
- за 5 рабочих дней до начала работ уведомить филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» о дне и часе производства работ, при выполнении которых необходимо присутствие эксплуатирующей организации;
- не менее чем за 3 рабочих дня до начала работ пригласить представителя филиала «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» на место производства работ для указания по технической документации трассы газопровода и мест шурфования (для определения точного местонахождения газопровода);
- не допускать к работе в охранной зоне газораспределительных сетей применение механизмов и ударных инструментов.

Должностные лица и граждане, виновные в нарушении требований перечисленных выше Правил, а также функционирования газораспределительных сетей, привлекаются к ответственности в порядке, установленном законодательством Российской Федерации.

По всем вопросам, касающимся производства земляных работ вблизи подземного газопровода, следует обращаться по адресу: д. Ландыши, филиал «Моргаушимежрайгаз», тел.: 6-02-28.

Асăрхаттару

# Пĕччен карчăксене вĕлернĕ



2011–2012 çулсенче Атăлçи тата Урал федераллă округсенче пĕччен пурăнакан ватă хĕрарăмсене вĕлернĕ 31 тĕслĕх пулнă. Вăл шутра пирĕн республикăра – икĕ карчăка вĕлерни.

Акă Шупашкарти Николаев урамĕнчи хваттерте пурăнакан пĕччен карчăкăн хваттерĕнче пушар сỹнтернĕ хыççăн унта çак карчăкăн кĕлеткине тупаççĕ. Малтанласа тунă тĕрĕслевсем 1929 çулта çуралнă карчăкăн хваттерĕнчен 40 пин тенкĕ çухалнине те палăртнă. Тепĕр тĕслĕхĕ те Шупашкартах пулса иртнĕ. Декабристсен урамĕнчи хăйĕн хваттерĕнче 1939 çулта çуралнă карчăкăн кĕлеткине тупаççĕ.

Икĕ тĕслĕхĕнче те вилĕм кислород çитменнипе çыхăннă, хваттерсенче япаласене арпаштарса тăкнă. Специалистсем шутланă тăрăх иккĕшĕнче те пĕр çыннăн алли палăрать: 20–25 çулсенчи арçын, 170–175 см çỹллĕш пулма пултарать, тĕксĕм çỹçлĕ, куçĕсем тĕксĕм, хыткан кĕлеткеллĕрех.

Районти полици пайĕ ватă çынсене уйрăмах асăрханулла пулма ыйтать. Çак çын пирки информаци пулсан дежурнăй чаçе 62-6-67 е 02 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтерĕр.

**О. ПОТРЯКОВ,**

**уголовлă шырав уйрăмĕн пуçлăхĕ.**


Внимание!

Совместный проект

ООО «Фирма «Элис»,

Национальной библиотеки ЧР и КАФ «ЭкАудит»

конкурс:

«БухгалтерПрофессионал-2012!»

3 тура!

Сертификаты!!! Призы!!!

Регистрация участников до 12 ноября 2012 года!

Справки по телефонам: 62-35-15, 40-66-07, 40-66-08

# Чирличчен грипа асăрхаттарма çăмăлрах

Кĕркунне çитсен шăнса пăсăлас мар тесе, ăнсăртран грипп çаклатас мар тесе тăрăшатпăр: витаминсем те, эмел те ĕçетпĕр. Анчах та хамăрăн организм вăйне патне çитсен кăна мар, тăтăшах çирĕплетмелли пирки манăран пурпĕрех чирлетпĕр. Хыççăн вăл та, ку та пулăшмарĕ тесе ӳпкелешетпĕр.

Грипран сыхланмалли мелсем чылай. Врачсем вара малтанах чи ансат йĕркесене пăхăнма сĕнеççĕ. Акă Шупашкар хулин тĕп больницин пĕтĕмĕшле практика врачĕ А. Дубова уçă сывлăшра ытларах пулма тăрăшмаллине палăртать. Апла пулсан пирĕн урамра уçăлса çӳренисĕр пуçне пӳлĕме те тăтăшах чӳрече уçса уçăлтармалла. Чир сарăлнă вăхăтра çынсем чылайăн пулакан вырăнсене çӳреме тăрăшмалла мар. Чирлисене вара врач больничнăй хучĕ илме сĕнет тата ватăпа марля çыххипе çӳреме именмелле маррине калать.

Районти тĕп болницăн эпидемиолог врачĕ Г. Соколова вакцинаци грипран сыхлакан чи витĕмлĕ май пулнине асра тытма сĕнет. Вакцинăпа организма вирусăн антигенĕсене яраççĕ. Препаратра вирус хăй çук. Препаратри антигенсем шăпах организма грипа парăнма памаççĕ.

Районти санитарипе эпидемиологи комиссийĕн секретарĕ Г. Воробьева пĕлтернĕ тăрăх кăçалхи виçĕ кварталта районта çынсем шăнса пăсăлнин 1958 тĕслĕхне шута илнĕ. Чирленисенчен иккĕ виççĕмĕш пайĕ майлах 17 çул тултарманнисем пулнă.

2011–2012 эпидсезон тапхăрĕнче районти 8669 çынна тĕллевлĕ вакцинаци шучĕпе прививка тунă пулнă. Муркашри чăх-чĕп фабрикинче ертӳçĕ пуçарулăхĕпе унти 20 çынна прививка тунă. Районти ытти пысăк предприятисенче ĕçлекенсем кун пирки шухăшламан. Уйрăмах суту-илӳпе обществăлла апатлану сферинче ĕçлекенсене прививка туманни шухăша ярать. Вĕсем чылай çынпа хутшăнаççĕ-çкеха. Тата, вăрттăнлăх мар, чирлесен больничнăй хутне илме те васкакансем сахал.

Çакна тата ытти сăлтава шута хурса 2012–2013 эпидсезон тапхăрне хатĕрленсе районти предприятисемпе организацисен ертӳçисем те ответлăрах пуласса шанас килет. Ку тĕлĕшпе нумаях пулмасть асăннă комисси ятарлă йышăну та кăларчĕ. Çавăнпа та кирек епле коллективра та сывлăхлă ĕçченсем вăй хуччăр тесен вакцинацирен пăрăнса иртмелле мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# 40 урлă каçсан та тăн кĕмест-ши?

**Саккун тавра 12+**

«Вăл пире хирĕç каяймасть: характерĕ çемçе», – çапла каларĕç наркотик серепине лекнĕскерсем хăйсене наркотик туса хатĕрлеме тата йышăнма май туса панă пĕлĕшĕ пирки. Хыркассинче хăйĕн ашшĕ-амăшĕн килĕнче пĕчченех пурăнать вăл. Ытти нумай арçын пекех укçа ĕçлесе илес тĕллевпе сайра хутра кӳршĕ республикăна кайса килет. Характерĕ вара чăн та çемçе темелле: ун патĕнче яланах юлташĕсем нумай (тепĕр тесен те юлташ темелле ĕнтĕ вĕсене).

Акă кăçал çулла ун патĕнче çак ялтах пурăнакан Николай час-часах хăнара пулнă. Унăн пурнăç историйĕ таса мар: арçынна темиçе хутах судпа айпланă – наркотик хутăшĕсене туяннăшăн тата упранăшăн. Хăнана вара вăл пĕччен мар, Шупашкарти юлташĕсемпе пĕрле пырса çӳренĕ. Тĕллевĕ пĕрре пулнă – наркотик хатĕрлесе ăна йышăнасси.

Акă июль уйăхĕн çурринче Николай çак арçын патне пĕччененех пырать. Хăйпе пĕрле кăшт апат-çимĕç тата эрех илсе кĕрет. Ку пĕтĕмпех кил хуçи валли мĕн. Хăй вара кунта пӳртри хатĕр-хĕтĕрпе усă курса хăйпе пĕрле пулнă япаласенчен наркотик хатĕрлет. Суд тенкелĕ çинче ларса курнăскер наркотик туса хатĕрлеме тата йышăнма ирĕк паракана уголовлă явап кĕтнине пĕлет-ха вăл. Кил хуçине кучченеçпе ыр пулнă вĕт, тата мĕн кирлĕ ăна тесе наркотика кунтах йышăнать.

Июлĕн 25-мĕшĕнче çак «ăш пиллĕ» кил хуçи патне Николай Шупашкартан килнĕ Мамонтовпа пĕрле каять. Апат-çимĕçпе эрех – каллех кил хуçи валли кучченеç вырăнне. Хăйсем вара пĕлнĕ ĕçе тытăнаççĕ...

Çак каç вара Ивановăн килне кĕтмен хăнасем те çитеççĕ – полици сотрудникĕсем. Ӳсĕр кил хуçи çывăрнă. Пӳртре шприцсем выртнăран, сăмсана çуракан шăрш тăнăран виçĕ арçынна тӳрех тĕрĕслев иртме яраççĕ. Июлĕн 30-мĕшĕнче Николая арестлеççĕ.

Иванов патне вара тепĕр уйăхран татах хăнасем килеççĕ: пĕри – çак ялсемех, тепри – каллех Шупашкартан. Ялти пĕлĕшĕ йĕплĕ пралук хыçĕнчен нумай пулмасть таврăннă мĕн. Кил хуçи валли эрех илсе кĕреççĕ. Ку хутĕнче Иванов хăй те арçынсем наркотик йышăннине курать. Çак каç та полици сотрудникĕсем вăхăтлă çитеççĕ: шприцсем выртаççĕ, мăкăнь улăмĕ тата ытти ăпăр-тапăр...

Иванов хăйĕн килĕнче чăн-чăн наркопритон туса хунă. Эрех ĕçсе пултăр ăна – ытти пурпĕрех. Саккуна пăсакансем валли мĕн чуль ырлăх туса панă вăл. Хăйне валли вара суд тенкелне кăна хатĕрленĕ. 40 урлă каçсан та тăн кĕмест-ши çынна?

Ивановăн малашнехи шăпи халĕ суд йышăнăвĕнчен килет.

**Л. ЯДЫКОВА,**
**Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн дознавателĕ.**

# Яваплăх туйăмĕ пулмаллах

**Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх**

Çул-йĕр çинче пулса иртекен инкексем чылай сăлтавпа çыхăннă. Вăл шутра – водительсем руль умне ӳсĕрле ларни тата çуран çӳрекенсем ӳсĕр пулнипе йĕркене пăхăнманни те. Хыçа юлнă виçĕ кварталта кăна пирĕн районта ӳсĕр водительсен айăпĕпе пулнă 5 аварире (пулса иртнĕ аварисен 10 проценчĕ) 5 çын суранланнă.

Лару-тăру çивĕч пулнăран «Урă мар водитель» ятарлă акцисем те иртернĕ. Сăмахран, октябрĕн 12–14-мĕшĕсенче акци вăхăтĕнче 2 ӳсĕр водителе тытса чарнă. Акци октябрĕн 26–28-мĕшĕсенче те иртрĕ. Ку хутĕнче руль умне ӳсĕрле ларнă водительсене явап тыттарнă.

Çуран çӳрекенсем ӳсĕр пулни инкек патне илсе çитерни сахал мар пулать. Акă октябрьте пулнă пĕр тĕслĕхе илсе кăтартар. Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск çул çинче Анаткас Хачăкра пурăнакан пĕр ӳсĕр арçын çул варрипех утса пынă. Машина килнине курсан та, ӳсĕрскер, пăрăнса ĕлкĕреймен. Çапла «уçăлса çӳрени» ахаль вĕçленмен: ăна машина çапса каять.

Çул çинче техникăпа темĕн те пулма пултарать. Тепĕр чухне чарăнса ăна пăхса илме те тивет. Çапла акă Атăл – Гигант – Мăн Сĕнтĕр – Шашкарвăрри çул çинче пĕр водителĕн хăйĕн ГАЗ-53А тиев машинине çул хĕрринче чарма тивет. Машинăна тĕрĕсленĕ вăхăтра вара ăна çулпа пыракан пысăк тиев машини ытла çумран иртнипе икĕ машина хушшине хĕстертсех хурать. ГАЗ водителĕ вырăнтах вилсе каять.

Тепĕр тĕслĕх. Атăл – Вăрăмой çул çинче пулса иртет ку инкек. Тислĕк тиенĕ КамАЗăн темĕн ванать. Водитель машинăна Ярапайкассинчи урамра çул хĕррине чарса лартать, габарит çутисене çутать. Шал енчи урапа шăтнă иккен. Анчах та çак пысăк машинăна пĕчĕкрехххи, Фольцваген транспортер маркăлли, пырса çапать. Водительне транспортпа çӳрес ирĕкрен 18 уйăхлăх кăçал çулла хăтарнă пулнă мĕн. Инкекре суранланнăран ăна больницăна леçмелле пулса тухать.

Аварисем яланах пысăк хăрушлăхпа çыхăннă, мĕншĕн тесен вĕсенче – çын пурнăçĕ, сывлăхĕ. Çавăнпа та яваплăх туйăмĕ пирки никамăн та манмалла мар.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти пуçлăхĕ.**

# Тăван тавралăхпа паллашрĕç

Çут çанталăка, тăван тавралăха упрамалли пирки эпир ачасене тăтăшах аса илтеретпĕр, нумай калаçатпăр. Вĕсене çут çанталăка упранă тĕслĕхсемпе паллаштарни вара каласуран кăтартуллăрах. Çакна шута хурса иртнĕ кунсенче Муркашри вăтам шкулти 10 «в» класра вĕренекенсем Ильинкăра упранакан çут çанталăк палăкĕ – Чăваш Енри чи ватă юман патне çитсе килме шутларĕç.

Питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç пире Ильинкăра. Малтанах кунти шкулта вырнаçнă Гузовский ячĕпе йĕркеленĕ музейпа паллашрăмăр. Интереслине чылай пĕлтерчĕ пире шкул директорĕ Надежда Иванова.

Хыççăн вара капмар та çӳллĕ юман патне çитрĕмĕр. Чăваш халăхĕ çак юмана пиллĕкмĕш ĕмĕр упраса пурăнни питĕ чаплă. Акă ĕнтĕ вăл инçе каймалла мар ырă тĕслĕх – çут çанталăка чăннипех те юратни.

Кунтах «хӳтлĕхре» паллă çĕпĕр лиственници те ӳсет. Ăна шăпах Б. Гузовский вăрманçă лартса хăварнă. Атăл хĕрне те анса хăпартăмăр. Ун анлăшĕ, вăл кунта юхса выртни мăнаçлантарать.

**Шкултан хыпарлаççĕ**



Интереслĕ те усăллă экскурси пулчĕ пирĕн. Епле хитре пирĕн тăван тавралăх. Ăна малашне те упраса пурăнасчĕ пирĕн. Тен юман патĕнче ачасем хут çине çырса хăварнă шухăшĕсенче кун пирки те сăмах пулчĕ пулĕ. Шухăшĕсем вăрттăнлăхра юлччăр, пурнăçланччăр.

**А. ВАРЛАМОВА,**
**класс ертӳçи.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Полици хроникинчен 12+**

## «Тарăн шухăшлă» арçын

Атапайра пурăнакан пĕр арçын çав ялти хĕрарăм патнех хăнана кайнă. Килти пекех туяс тесе-ши, вăл хăйне ытла та ирĕклĕ тытма пуçланă. Шухăшĕ вара тарăн пулнă унăн: çак пӳртрен укçасăр тухса каяс темен вăл. Çапла вара хĕрарăма кĕлеткине ыраттармаллах урайне çавăрса çапать. Нимĕн пулман пекех 17400 тенкĕ илсе тухса каять.

Маларах та пĕрре мар судпа айăпланнăскере ку хутĕнче çĕнĕ статья кĕтет. Уголовлă ĕç пуçарнă.

## Амăшне виличченех хĕненĕ

Ку тискер ĕç Кӳстерекре пулса иртет. Каçалапа амăшĕпе ывăлĕ хушшинче хирĕçӳ тухать. Ывăлĕ этем картĕнчен тухсах кайнă тейĕн: амăшне ăçтан лекнĕ унтан швабрăпа темиçе хутченех çапать. Ку та çитмен пек туйăннă ăна: тимĕр турчкапа пуçĕнчен ислетнĕ кăна вăл хăйне пурнăç паракана. Тен çав вăхăтра амăшĕн пуçне «ма çуратрăм-ши сана» текен çылăхлă шухăш та кĕчĕ пулĕ. Анчах иртнĕ вăхăта та, ывăлĕн аллинчи турчкана тутаннă амăшне те каялла тавăраймăн: йывăр сурансене пула вăл вилсе каять.

Ку ĕçе уçăмлатассипе халĕ следовательсем тăрăшаççĕ, уголовлă ĕç пуçарма хатĕрленеççĕ.

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Пирĕн хăна**

## «Кашни юрă чĕререн тухать»



Чăвашла, вырăсла, çармăсла – юрăсене тĕрлĕ чĕлхепе шăрантать вăл. «Кашни юрă чĕререн тухать», – тет Раççей Федерацийĕн тата Мари Эл Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Арсений Яйцов. Çакă, паллах, чи пĕлтерĕшли, чи пахи.

Вăл ирттерекен концертсен тепĕр пĕлтерĕшлĕ ен те пур – вĕсем яланах тӳлевсĕр иртеççĕ. Муркаш районне Арсений Яйцов 14-мĕш çул килет ĕнтĕ. Шкулсемпе ача сачĕсенче, ватăсемпе инвалидсен çурчĕсенче, больницăсенче тата ытти чылай коллектив умĕнче юрлать вăл.

Ку хутĕнче Арсений Яйцов пирĕн районта 16 концерт ирттерчĕ. Пурĕ вара 14 çул хушшинче вăл Раççейре тата ун тулашĕнче 3030-а яхăн концерт кăтартнă.

«Чăваш халăхне, сире, Муркашсене, юрă-кĕвĕ юратнăшăн, ĕçчен пулнăшăн хисеплетĕп. Малашне те Муркашсене малта пулма сывлăх, телей сунатăп. Сирĕн район администрацийĕн çĕнĕ ертӳçине Ростислав Тимофеева пысăк вăй-хăват, чăтăмлăх, сывлăх сунатăп, ĕçре тĕрек пама пултаракан чăн-чăн ĕçтешсем пулччăр унăн», – чĕререн тухакан сăмахĕсене пĕлтерчĕ Арсений Арсеньевич.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: А. Яйцов Надежда Кадышева юрăçпа пĕрле.**

**Ыйту – хурав**

## Муркашри стадионăн хуçи пур-и?

***«Муркашри стадионта касу çӳрет. Унта касу çӳреме юрать-и вара? Халĕ çăрса пĕтерсен çуркуннепе пирĕн ачасен вăл стадионта мĕнле вылямалла? Муркашри стадионăн хуçи пур-и?»***

**Çак ыйтусене телефонпа шăнкăравласа пĕлтерчĕ ятне палăртма килĕшмен арçын. Çак стадион республикăри Спортпа туризм министерствин Муркашри В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен ятарлă спорт шкулĕн балансĕ çинче пулнине пĕлсе эпир хушма пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕн дирктлорĕпе А. СИДЮШКИНПА çыхăнтăмăр.**

– Стадион чăнах та пирĕн баланс çинче тăрать. Апла тирпей-илем кĕртсе тытса тăрассине те эпир пурнăçлатпăр. Ыйту çине хуравласа акă мĕн палăртатăп: унта касу çӳремест. Стадионти курăка та çулса тирпейлесе тăракан пур. Стадионта касу çӳресе çăрса пĕтернĕ пулсан унта ăмăртусем ирттерме те май пулас çукчĕ. Ăмăртусем вара тăтăшах иртеççĕ. Сăмахран, кашни çулах сентябрь вĕçнелле В. Егорова ячĕпе йĕркелекен ăмăртăвăн тата «Наци кросĕн» чупăвĕсем иртеççĕ. Шăпах улăх-çарансенче курăк пĕтсе пынă вăхăт, апла пулин те касу çӳреместех.

**Н. АНДРЕЕВА хатĕрленĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх

# Утарçăсен тăсăмĕ

## Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт



Журналист тивĕçне пурнăçласа тĕрлĕ ĕçпе пурăнакан çынсемпе тĕл пулатăп. Хăйсем суйласа илнĕ ĕçе юратса тата чуна парса пурнăçлакансем вара кашнинчех куç умне телейлĕрех те çамрăк чунлăрах тухаççĕ. Ку çапла пулмалла та пулĕ. Çак чăнлăх Станислав Смирновпа **(сăн ÿкерчĕкре)** тĕл пулса паллашса кĕске калаçу ирттерсен те айккинче юлмарĕ.

– Ĕçлемелле, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалла, юратса тунă ĕç ĕмĕре тăсать, çамрăклăха упрать. Ĕçленипе пĕрлех эрех-сăраран, пирус таврашĕнчен катара тăни – пирĕн пурнăçри яшлăха тăснин тĕп вăрттăнлăхĕ. Çакна эпĕ пĕчĕккĕллех ăша хыврăм, – терĕ пыл сутакан арçын хăйĕн ĕçĕхĕлĕпе тата пурнăçĕпе кăсăкланса ыйту парсан.

Муркаш пасарĕнче темиçе тĕрлĕ пылпа сутă тăвакан арçын пирĕн район хуньăм районĕ тет. Унăн мăшăрĕ пирĕн район хĕрĕ Маргарита иккен, хĕр чухнехи хушамачĕ Яковлева. Вăл Муркашрах çуралса ÿснĕ. Утарти кирек хăш ĕçе те пĕлет унăн алли.

Çак тĕлте пирĕн калаçу Етĕрне районĕнчи Анат Ачакра пурăнакан Смирновсен утарçă династийĕ çине кĕрсе кайрĕ.

– Кукаçи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен çĕнтерÿпе таврăнсанах утарçă ĕçне кÿлĕннĕ. 1972 çулччен çак ĕçре пысăк опыт пухса пире те нумай вĕрентме ĕлкĕрчĕ вăл. Шел, ĕнерхи фронтовик утартах пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Аттепе аннене пĕр вĕлле тата ĕç юратăвĕ парса хăварнă вăл. Пурăна-киле пĕр çемьерен 100 вĕллелĕ утара ÿстерсе çитерчĕç вĕсем. Пире те, виççĕ ачине, пурнăç парса пĕчĕккренех утарпа та вĕлле хурчĕпе туслашма пулăшрĕç. Манăн та, йăмăкпа шăллăмăн та паян килсенче харпăр хăйне ятăн утарсем пур.

Утар ĕçне парăннă мăшăр 1 ывăлпа 2 хĕр çуратса ÿстернĕ те паян хăйсенипе пĕрлех ывăлĕн утарĕнче 3 мăнукне пыл хурчĕсене юратма вĕрентет. Пурнăçпа тан пыма тăрăшни ĕмĕре тăсние те пытармарĕ арçын. Паянхи рынок хутшăнăвĕсенче килти хушма хуçалăх ял çыннишĕн пысăк тĕкĕ пулни пирки каласать ял хуçалăх ĕçĕпе чунтан туслашнă арçын.

Ĕç тенĕрен, манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм хурт ĕрчетес ĕçре самантлăха та пĕр вырăнта лармасть. Тăташах шыравра вăл. Акă иртнĕ çул çемье пулăшнипе хăйĕн ĕçне çĕнĕлле йĕркелесе яма патшалăх пулăшăвне те илме мехел çитернĕ. Çавăнпа та Смирновсен йăхĕнче хурт-хăмăрпа пыл пысăк хисепре.

– Кăçал ялсенчи утарçăсем пыл сахал тени тĕрĕсех. Анчах... Кунта пĕр вырăнта ларсах пыл илесси пирки ĕмĕтленекенсене ырлас килмест. Эпĕ, тĕслĕхрен, вĕллесене пыл паракан йывăç-курăксем ÿсекен вырăнсене тăташах турттарса тухса паха пыл илтĕм. Анчах ытти çулхинчен чăнах та сахалрах пулчĕ вăл. Вĕллесене тĕрлĕ çĕре илсе çÿренĕрен эпĕ сутакан пыл сиплĕхĕ те тĕрлĕрен. Вĕсем кашниех вăл е ку чиртен сывалма пулăшаççĕ. Хам патăмран тавар туянакана эпĕ кун пирки тĕплĕ каласа паратăп, – вăрттăнлăхне уçса ăнлантарулла каласать пыл сутнă хушăрах. Агроном специальноçне алла илсе хăй 21 çул А. Айдакпа ĕçлеме тÿр килнине пурнăç шкулĕ тесе хаклать. 9 çул ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче вăй хуни те Станислав Михайловичăн усăсăр иртмен. Тăрăшуллă утарçă пирĕн калаçура хăй те, ачисем те пурнăç улшăнăвĕпе тан пынине, аслă ăрурисем каланине-вĕрентнине пурнăçласа пынине, ĕçлес туйăмпа малалла пăхнине пытармарĕ.

Йывăрлăх ĕçпе парăнать, ĕçрех çамрăклăх упранать. Пурнăç тулли пултăр тесен çичĕ хут тар кăларса иртен пуçласа каçчен ĕçлемелле. Ырă пурнăç патне ĕçпе кăна çитме пулать. Ĕçленĕ вăхăтра пуçтарăнса юмах ярса вăхăта ирттерсен çĕнĕлĕхсене вăхăтра алла илесси иккĕленÿллĕ. Çакна ăнлантăм эпĕ Станислав Смирновпа иртнĕ калаçура.

... Эпĕ уйрăлса утрăм. Утарçă патĕнчен вара пыл туянас текенсем тата унпа вăл е ку чиртен сывалас шутлисем татăлмарĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

## Усăллă çимĕç

## Укроп

Кĕрхи пахча тĕрлĕ çимĕçпе тулăх. Мĕн акни-лартнине йăлтах пухса кĕлете хыврăмăр. Укроп уссине аван пĕлекен çулçăине кăна мар, вăррине те çителĕклĕ хатĕрлерĕ пулĕ. Асăннă çимĕç 15 тĕрлĕ чиртен сиплет, ытти курăксемпе пĕрле усă курсан – унтан та ытларах.

Унпа пÿрери хăйăрпа чула кăларма усă кураççĕ. Ăна валли чей кашăкĕ чухлĕ укроп вăрри тата вĕтетнĕ петрушка тымарĕ илсе хутăштармалла. 400 грамм шыв хушса вĕреме кĕртмелле. Çак хутăша сăрăхтармасăрах кунне 6 – 8 хутчен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ĕçмелле.

Ачасен те, ватă çынсен те вăйлă бронхит чухне чей кашăкĕ чухлĕ укроп вăрри илмелле, унта 300 грамм сĕт хушмалла та вĕреме кĕртмелле. Çак хутăша кунне 3 хутчен ĕçмелле. Укроппа сĕт хаяр ÿслĕк чирĕ (коклюш), бронхоэкстаз тата ÿпке абсцесĕ чухне те лайăх. Çак шĕвеке ĕçес умĕн пĕр чей кашăкĕ пыл хушма юрать. Кун пек чухне сиплĕх ытларах пулать.

Хырăм кÿпĕннĕ (метеоризм) тата апат пыршăсенче йĕркеллĕ ирĕлми пулсан (диспепсия) та укроп усси пысăк.

## Пулă çăвĕ

Пулă çăвĕ пысăк молекулярлă çу кислотисенчен тăрать. А тата Д витаминсемпе пĕрле вĕсем çĕнĕ клеткăсене ÿссе аталанма пулăшаççĕ. Çавна май аманнă вырăнсем те хăвăртрах сипленеççĕ.

Асăннă продукт чăннипех те усăллă. Пулă çăвĕ нумая тăсăлакан бронхитран тата гастритран, пыршă чирĕсенчен сывалма пулăшать. Çавăн пекех вăл организмăн иммунитетне çирĕплетет. Çавăнпа иммунитет вăйсăрланнă пур çынна та пулă çăвĕ кирлĕ. Вăл ракран сыхланмалли тата радиаци чирĕнчен сипленмелли хăватлă çимĕç те шутланать. Японецсен Хиросима тата Нагасаки хыççăнхи, Чернобыль зонинчи ĕç опычĕ пайăрка чирĕпе аптăракансем пулă çăвне ĕçнĕ хыççăн хăйсене лайăхрах туйнине кăтартса панă.



## Пĕлетĕр-и?

Ĕне çур пурнăç тесе хаклать ял çынни. Анчах пĕлетĕр-и: пĕр литр сĕт пулма ĕне çилли витĕр 400-500 литр юн иртмелле. Тĕслĕхрен, сĕт паракан вăтам ĕнен çилли урлă талăкра 8–10 тонна юн иртет.

## Ыйту-хурав

## Ӳстерме кăткăс мар

*Чÿрече анинче ÿстерекен хĕрлĕ йÿç пăрăç чечек пекех хитре. Усăллă та теççĕ ăна. Çак пăрăça ÿстерме вăрттăнлăхĕсем чылай-и?*

**В. СКВОРЦОВ.**

Вулакан тĕрĕсех асăрханă. Чÿрече анинче çитĕнтернĕ хĕрлĕ йÿç пăрăç пÿрте илем кÿрет çеç мар, унăн усси те пысăк.

Çак культурăна чÿлмеке акăр. Енчен те пÿлĕмре тутлă пăрăç калчи те ÿсет пулсан, унпа пĕрле хутăш шăркаланасран, йÿç пăрăçа ÿссе çитсен урăх пÿлĕме вырнаçтарăр.

Пÿлĕмри хĕрлĕ пăрăç ачаш мартан ăна ÿстерме кăткăс мар.

Йÿç пăрăç – нумай çул ÿсекен культура. Пĕр тĕм 5 çул хушши чип-чипер çимĕç парайрать. Турачĕсем чĕрĕлсе анасран пĕчĕк тĕревсем вырнаçтарма ан манăр çеç.

**Ю. ВЯЗОВ,**
**пахчаçă.**

# Сивĕ хĕл алăкран шаккать

## Сад-пахчаçăн уйăх календарĕ

Çак уйăхра кĕркуннепе хĕл тĕл пулаççĕ. Çавăнпа та хĕле хатĕрленсе сад-пахчара юлнă ĕçсене ырана хăвармасăр вĕçлемелле. Улмуççисен аялти пайне тольпе е рубероидпа чĕркени вĕсене кăшлакан чĕр чунсем сиенлесрен хÿтĕлет. Çулçăсем тăкăнса пĕтнĕ май çимĕçсем панă йывăççен çинче сăтăрçăсем хĕл каçма хатĕрленнине курма пулать. Вĕсене пĕр тăхтаса тăмасăр пуçтарса çунтарса ямалла. Ырана хăвармасăр сивве тÿсĕмлĕ пахча çимĕç культурисене аксалартса хăвармалла. Асăрхаттаратпăр, купăста тăварлама çак уйăхра тулли уйăхпа çĕнĕ уйăх вăхăчĕсемсĕр пуçне кашни кунах меллĕ.

Халăхра чÿк уйăхĕ пирки çапла каланисем пур: «Чÿк уйăхĕнчи вăрăм тунасем – ăшă хĕл паллисем», «Чÿк уйăхĕнче ирлесе çăвакан çумăр каç енне юра çаврăнма пултарать», «Чÿк уйăхĕ – хĕл алăкĕ», «Чÿк уйăхĕнче хĕлпе кĕр кĕрешеççĕ».

Малалла çак уйăхра садпа пахчара пурнăçламалли кулленхи ĕçсем пирки.

**Чÿк уйăхĕн 1–2-мĕшĕсем.** Пÿлĕмре симĕсле çиме суханпа ыхра, кресс-салат, çулçăллă горчица лартмалла-акмалла.

**Чÿк уйăхĕн 2–4-мĕшĕсем.** Уйăх календарĕпе пÿлĕмри ÿсен-тăрана апатлантарма тата шăварма мелсĕр кунсем. Вăрлăх, удобрени, ÿсме пулăшакан стимуляторсем туянма тăрăшмалла. Хуçалăх ĕçĕсем пурнăçлама юрать.

**Чÿк уйăхĕн 4–6-мĕшĕсем.** Пÿлĕмри ÿсен-тăрана касма-татма пачах юрамасть. Вĕсене вăрăран акма, апатлантарма тата шăварма чару çук.

**Чÿк уйăхĕн 6–9-мĕшĕсем.** Çырла тĕммисене юрпа витни лайăх. Юр хулăнăшне, вăл пахчари ÿсен-тăрана мĕн хулăнăш витнине тĕрĕслени пăсмасть.

**Чÿк уйăхĕн 9-мĕшĕ.** Пÿлĕмре симĕсле çиме суханпа ыхра, кресс-салат, çулçăллă горчица лартмалла-акмалла. Чÿрече умĕнче тĕрлĕ сухана симĕсле çиме ÿстерме пуçламалла.

**Чÿк уйăхĕн 9–11-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăранпа нимĕнле ĕç те пурнăçлама юрамасть. Тăварлама та, йÿçĕтме те мелсĕр кунсем.

**Чÿк уйăхĕн 11–12-мĕшĕсем.** Петрушкăпа сельдерейăн тымарĕсене, нумай çул ÿсекен сухана апатра симĕсле усă курма лартмалла.

**Чÿк уйăхĕн 12–14-мĕшĕсем.** Удобрени хывма меллĕ кунсем. Куршаксенчи тăпрана кăпкалатмалла. Пÿлĕмри ÿсен-тăран сăтăрçисемпе кĕрешмелле. Улмуççисен сапанĕсене çуркунне сыпма хатĕрлесе хумалла.

**Чÿк уйăхĕн 14–16-мĕшĕсем.** Витаминлăх калчасем ÿстерме тĕрлĕ ÿсен-тăран вăрлăхĕ акма юрать. Пÿлĕмри чечексене шĕвĕ удобренипе апатлантарма меллĕ. Чечексен сăтăрçисемпе кĕрешмелле. Улма-çырла йывăççисем çинчен хĕл каçма хатĕрленнĕ сăтăрçăсен йăвисене пуçтармалла та çунтарса ямалла. Купăста тăварламалла, пахча çимĕçпе улма-çырлана консервламалла.

**Чÿк уйăхĕн 16–19-мĕшĕсем.** Пахчара юр тытассипе ĕçлемелле. Туратсем çинчи юра силлемелле. Улма-çырла йывăççисем таврашĕнчи юр тарăнăшĕпе интересленмелле. Пан улми тата çырла йывăççисем тавра юр таптаса пусăрăнтармалла. Улмуççисен сапанĕсене çуркунне сыпма хатĕрлемелле.

**Чÿк уйăхĕн 19–21-мĕшĕсем.** Пахчара юр тытассипе ĕçлемелле. Туратсем çинчи юра силлемелле. Улма-çырла йывăççисем таврашĕнчи юр тарăнăшĕпе интересленмелле. Пан улми тата çырла йывăççисем тавра юр таптаса пусăрăнтармалла. Улмуççисен сапанĕсене çуркунне сыпма хатĕрлемелле. Сывлăш температури тăтăш 5–8 градус сивĕ тăрать пулсан роза тĕммисене хĕл каçма витмелле.

**Чÿк уйăхĕн 21–23-мĕшĕсем.** Пÿлĕмри ÿсен-тăрана апатлантарма тата шăварма мелсĕр кунсем. Вăрлăх, удобрени, ÿсме пулăшакан стимуляторсем, садра ĕçлемелли хатĕрсем туянма тăрăшмалла. Хуçалăх ĕçĕсем пурнăçлама юрать.

**Чÿк уйăхĕн 23–24-мĕшĕсем.** Органикăллă шĕвĕ удобрени хывма меллĕ кунсем. Куршаксенчи тăпрана кăпкалатмалла. Пÿлĕмри ÿсен-тăран сăтăрçисемпе кĕрешмелле. Купăста тăварлама, пахча çимĕçпе улма-çырлана консервлама, компотсемпе соксем хатĕрлеме лайăх кунсем.

**Чÿк уйăхĕн 24–26-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăранпа нимĕнле ĕç те тумалла мар.

**Чÿк уйăхĕн 26–27-мĕшĕсем.** Пахчара юр тытассипе ĕçлемелле. Туратсем çинчи юра силлемелле. Улма-çырла йывăççисем таврашĕнчи юр тарăнăшĕпе интересленмелле. Пан улми тата çырла йывăççисем тавра юр таптаса пусăрăнтармалла. Пÿлĕмри ÿсен-тăрана тĕкĕнмесен те юрать.

**Чÿк уйăхĕн 27–29-мĕшĕсем.** Хĕл вăй илсе пынă май пÿлĕмре симĕсле çиме суханпа ыхра, кресс-салат, çулçăллă горчица лартмалла-акмалла.

**Чÿк уйăхĕн 29–30-мĕшĕсем.** Пÿлĕмри ÿсен-тăрана апатлантарма тата шăварма мелсĕр кунсем. Вăрлăхпа удобрени, ÿсме пулăшакан стимуляторсем туянма тăрăшмалла. Хуçалăх ĕçĕсем пурнăçлама юрать.

**А. БЕЛОВ.**



**Çу илемне хĕл ыйхипе улăштарма хатĕрленет ял пĕви. А. ПЕТРОВ фотоэтюдĕ.**

# Т е л е п р о г р а м м а

**с 5 по 11 ноября 2012 года**

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 05.11

### ПЕРВЫЙ

5.50, 6.10 Х/ф «ТРАКТИР НА ПЯТНИЦКОЙ»
6.00, 10.00, 12.00 Новости
7.40 «Армейский магазин» 16+
8.20 М/ф «Аладдин»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.15 Среда обитания. «О чем молчит рыба» 12+
13.15 Концерт «Звезды против пиратства»
15.10 Х/ф «СТАРИКИ-РАЗБОЙНИКИ»
17.00 «Мавзолей» 16+
18.00 «Кто хочет стать миллионером?»
19.00 Х/ф «БРИЛЛИАНТОВАЯ РУКА»
21.00 «Время»
21.20 Т/с «ОБРАТНАЯ СТОРОНА ЛУНЫ» 16+
23.15 Х/ф «ГОРОДСКИЕ ПИЖОНЫ» ДЖОРДЖ КЛУНИ Х/ф «МАРТОВСКИЕ ИДЫ» 16+
1.05 Х/ф «ПАРК КУЛЬТУРЫ И ОТДЫХА» 18+
3.05 «Андрей Соколов. Долгая дорога в ЗАГС»
4.05 Т/с «TERRA NOVA» 12+

### РТР

5.05 Х/ф «О БЕДНОМ ГУСАРЕ ЗАМОЛВИТЕ СЛОВО» 12+
8.30 Х/ф «КАДРИЛЬ» 12+
10.15 Х/ф «САМАЯ ОБАЯТЕЛЬНАЯ И ПРИВЛЕКАТЕЛЬНАЯ» 12+
11.55, 14.20 Х/ф «КЛЮЧИ ОТ СЧАСТЬЯ» 12+
14.00, 20.00 Вести
16.05 «Кривое зеркало» Театр
18.05, 20.35 Х/ф «КАЖДЫЙ ЗА СЕБЯ» 12+
0.25 «Девчата» 16+
1.00 Х/ф «ОПАСНЫЕ СВЯЗИ» 16+
3.30 Комната смеха
4.25 «Городок»

### КУЛЬТУРА

7.00 «Евроньюс»
10.00 Х/ф «ПОДКИДЫШ»
11.15 «Легенды мирового кино»
11.45 Х/ф «КОНЕК-ГОРБУНОК»
13.05, 1.40 Д/ф «Гигантские монстры»
13.55 «Кудесники танца» Концерт Государственного академического ансамбля народного танца имени Игоря Моисеева
15.10 Х/ф «ВИЗИТ ДАМЫ»
17.30 XIII Международный телевизионный конкурс юных музыкантов «Щелкунчик» Второй тур. Струнные инструменты
19.05 «Искатели» «Чапаев. Человек и легенда»
19.55 В гостях у Эльдара Рязанова. «Каждому времени свое кино» Творческий вечер Карена Шахназарова
21.05 Х/ф «КАК ВАМ ЭТО ПОНРАВИТСЯ»
23.10 «25 лет Залу славы рок-н-ролла» Гала-концерт в Нью-Йорке
1.25 Д/ф «Мировые сокровища культуры» «Пафос. Место поклонения Афродите»
2.30 И. Стравинский. Сюита из балета «Жар-птица»

### НТВ

5.45 Х/ф «И СНОВА АНИСКИН» 12+
7.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20, 10.20 Х/ф «СМЕРШ. ЛЕГЕНДА ДЛЯ ПРЕДАТЕЛЯ» 16+
12.05, 13.25, 19.25 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
22.15 «Октябрь 17-го. Почему большевики взяли власть» 12+
23.30 Х/ф «ГРОМ ЯРОСТИ» 16+
1.25 Квартирный вопрос 0+
2.30 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
4.55 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## ВТОРНИК, 06.11

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Жить здорово!» 12+
10.25, 4.20 Контрольная закупка
10.55 Модный приговор
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Дешево и сердито»
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить 12+
15.15 Х/ф «БРИЛЛИАНТОВАЯ РУКА»
17.00 Т/с «НЕРАВНЫЙ БРАК» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ОБРАТНАЯ СТОРОНА ЛУНЫ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.20 «Городские пижоны» «Обитель лжи» 18+
0.55 Т/с «ГОРОДСКИЕ ПИЖОНЫ» «КАЛИФРЕНИЯ» 18+
1.30, 3.05 Х/ф «СКАЗКИ СТРИПТИЗ-КЛУБА» 18+
3.30 Т/с «TERRA NOVA» 12+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Все будет хорошо!» 12+
13.50, 16.45, 4.45 Вести. Дежурная часть
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-5» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 Т/с «ВЕРОНИКА. ПОТЕРЯННОЕ СЧАСТЬЕ» 12+
0.05 Т/с «САМАРА» 12+
2.00 Х/ф «КОСМИЧЕСКИЕ КОВБОИ» 16+

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.15-9.45 Человек труда
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «КАК ВАМ ЭТО ПОНРАВИТСЯ»
13.20 Д/ф «Вальтер Скотт»
13.30, 1.40 «Остров чудес»
14.25 Academia. Олег Кораблев. «Марс и Венера»
15.10 «Пятое измерение»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 Х/ф «ДОН ДИЕГО И ПЕЛАГЕЯ»
17.00 Д/ф «Алгоритм Берга»
17.30 XIII Международный телевизионный конкурс юных музыкантов «Щелкунчик» Второй тур. Духовые и ударные инструменты
19.00 Жизнь замечательных идей. «Наследники Икара»
19.45 Главная роль
20.05 Власть факта. «Праведный суд»
20.45 «Больше, чем любовь»
21.30 Academia. Хиероним Граля. «Польский взгляд на Смутное время»
22.15 «Игра в бисер» с Игорем Волгиным. «Лирика Марины Цветаевой»
23.00 «Рассекреченная история». «Бумажная битва титанов. Сталин и Черчилль»
23.50 Х/ф «АВГУСТ»
1.20 Л. Бетховен. Соната №10. Солист В. Афанасьев
2.40 Д/ф «Мировые сокровища культуры» «Гуинедд. Валлийские замки Эдуарда Первого»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.35 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Живут же люди!» 0+
10.55 «До суда» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА-2» 16+
21.25 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
23.10 Сегодня. Итоги
23.30 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Андерлехт» (Бельгия) - «Зенит» (Россия). Прямая трансляция
1.40 Х/ф «ЗАЛЕЗЬ НА ЛУНУ» 16+
3.30 «Советская власть» 16+
4.25 Дикий мир 0+
4.55 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## СРЕДА, 07.11

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Жить здорово!» 12+
10.25, 4.20 Контрольная закупка
10.55 Модный приговор
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Дешево и сердито»
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить 12+
15.15 Федеральный судья
16.10 Малахов +
17.00 Т/с «НЕРАВНЫЙ БРАК» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ОБРАТНАЯ СТОРОНА ЛУНЫ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.20 Т/с «ГОРОДСКИЕ ПИЖОНЫ» «БЕЛЫЙ ВОРОТНИЧОК» 16+
1.15, 3.05 Х/ф «28 ДНЕЙ СПУСТЯ» 18+
3.30 Т/с «TERRA NOVA» 12+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Все будет хорошо!» 12+
13.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-6» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 Т/с «ВЕРОНИКА. ПОТЕРЯННОЕ СЧАСТЬЕ» 12+
23.25 Т/с «САМАРА» 12+
1.20 Вести +
1.45 «Честный детектив» 12+
2.20 Х/ф «МОСТЫ ОКРУГА МЭДИСОН» 16+

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «АВГУСТ»
12.50 Д/ф «...С благодарностию: были»
13.30, 1.55 «Остров чудес»
14.25, 21.30 Academia
15.10 Красуйся, град Петров! Зодчий Александр Степанов.
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 Х/ф «ЗАЙЧИК»
17.20, 2.50 Д/ф «Карл Фридрих Гаусс»
17.30 XIII Международный телевизионный конкурс юных музыкантов «Щелкунчик» Второй тур. Фортепиано
19.00 Жизнь замечательных идей. «Алмазная лихорадка»
19.45 Главная роль
20.05 «Абсолютный слух»
20.45 Д/ф «Сорок минут с Дуровым. Лев Дуров»
22.15 Магия кино
23.00 «Рассекреченная история». «Тайная дипломатия»
23.50 Х/ф «ОНЕГИН»
1.35 И. Штраус. Не только вальсы

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.35 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Профессия - репортер» 16+
10.55 «До суда» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА-2» 16+
21.25 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
23.10 Сегодня. Итоги
23.30 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Бенфика» (Португалия) - «Спартак» (Россия). Прямая трансляция
1.40 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор»
2.15 Главная дорога 16+
2.50 Х/ф «ТЫ МНЕ СНИШЬСЯ...» 16+
4.55 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## ЧЕТВЕРГ, 08.11

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Жить здорово!» 12+
10.25 Контрольная закупка
10.55 Модный приговор
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Дешево и сердито»
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить 12+
15.15 Федеральный судья
16.10 Малахов +
17.00 Т/с «НЕРАВНЫЙ БРАК» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ОБРАТНАЯ СТОРОНА ЛУНЫ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.20 «Городские пижоны» «Гримм» 16+
1.15, 3.05 Х/ф «К-9: СОБАЧЬЯ РАБОТА»
3.15 Т/с «TERRA NOVA» 12+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Все будет хорошо!» 12+
13.50, 16.45, 4.45 Вести. Дежурная часть
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-6» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 Т/с «ВЕРОНИКА. ПОТЕРЯННОЕ СЧАСТЬЕ» 12+
23.20 «Поединок» 12+
0.55 Вести +
1.20 Х/ф «СМЕРТЬ ПОД ПАРУСОМ» 12+
4.10 «Городок»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Вспомни, солдат (на чувашском языке)
9.15-9.45 Секреты здоровья и красоты
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «ОНЕГИН»
13.05 Д/ф «Пелешян. Кино. Жизнь»
13.30, 1.55 «Остров чудес»
14.25, 21.30 Academia
15.10 «Письма из провинции»
15.40, 20.55, 23.30 Новости культуры
15.50 Х/ф «СТАРЫЙ ЗНАКОМЫЙ»
17.20 Важные вещи. «Трость А.С. Пушкина»
17.35 Д/ф «Отрицательный? Обаятельный! Неразгаданный Владимир Кенигсон»
18.15 Д/ф «Как Нерон спас Рим»
19.10 Телеканал «Культура» представляет Торжественное закрытие XIII Международного телевизионного конкурса юных музыкантов «Щелкунчик» Прямая трансляция
21.10, 1.40 Д/ф «Мировые сокровища культуры»
22.15 «Культурная революция»
23.00 «Рассекреченная история». «С точки зрения Брежнева»
23.50 Х/ф «АННА КАРЕНИНА»
2.50 А. Рубинштейн. «Вальс-каприс»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.35 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Медицинские тайны» 16+
10.55 «До суда» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА-2» 16+
20.45 Футбол. Лига Европы УЕФА. «Анжи» (Россия) - «Ливерпуль» (Англия)
22.55 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
23.55 Сегодня. Итоги
0.15 Х/ф «СИБИРЯК» 16+
2.10 «Дачный ответ» 0+
3.15 «Лига Европы УЕФА. Обзор»
3.50 Х/ф «КОЛОДЕЦ» 16+
4.20 Дикий мир 0+
4.55 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## ПЯТНИЦА, 09.11

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Жить здорово!» 12+
10.25, 5.15 Контрольная закупка
10.55 Модный приговор
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Дешево и сердито»
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить 12+
15.15 Федеральный судья
16.10 Малахов +
17.00 Т/с «НЕРАВНЫЙ БРАК» 16+
18.50 «Поле чудес»
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос» 12+
23.15 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» Сверхновый Шерлок Холмс. «Элементарно» 16+
1.05 Х/ф «ГДЕ-ТО» 16+
2.55 Х/ф «ГОРЯЧИЕ ГОЛОВЫ» 16+
4.25 Т/с «TERRA NOVA» 12+

### РТР

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.05 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Все будет хорошо!» 12+
13.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ВСЕГДА ГОВОРИ «ВСЕГДА»-6» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 «Юрмала-2012» 12+
23.25 Х/ф «ЖЕНИХ» 12+
1.15 Х/ф «БРУКЛИНСКИЕ ПОЛИЦЕЙСКИЕ» 16+
3.55 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.05 Мультфильм
9.10-9.45 Телеюрă
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.55 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
10.20 Х/ф «АННА КАРЕНИНА»
12.10 Д/ф «Забытое золото. Дмитрий Мамин-Сибиряк»
12.50 Д/ф «Кино и цирк: испытание простодушием»
13.30 Д/ф «Как Нерон спас Рим»
14.25 Academia. Лев Зеленый. «Экзопланеты»
15.10 «Личное время»
15.50 Х/ф «ГОЛУБЫЕ ГОРЫ, ИЛИ НЕПРАВДОПОДОБНАЯ ИСТОРИЯ»
17.25 Д/ф «Неизвестный АэС»
18.05 «Царская ложа» Галерея музыки
18.45 Игры классиков. Евгений Мравинский
19.45 Смехоностальгия
20.15 Х/ф «СНЕГА КИЛИМАНДЖАРО»
22.05 «Линия жизни»
23.00 «Рассекреченная история». «С точки зрения Брежнева»
23.55 Х/ф «ЗАЗИ В МЕТРО»
1.40 Д/ф «Мировые сокровища культуры» «Копан. Культовый центр майя»
1.55 Секстет Кэннонболла Эдderли
2.50 Д/ф «Антуан Лоран Лавуазье»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.40 «Женский взгляд» 0+
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Спасатели 16+
10.55 «До суда» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «Таинственная Россия» 16+
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА-2» 16+
21.25 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
23.30 «КАРПОВ. ПЯТНИЦКИЙ. ПОСЛЕСЛОВИЕ» 16+
0.25 Х/ф «ОЧКАРИК» 16+
2.15 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
4.15 Дикий мир 0+
4.35 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## СУББОТА, 10.11

### ПЕРВЫЙ

5.45, 6.10 Х/ф «ЛАРЕЦ МАРИИ МЕДИЧИ»
6.00, 10.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
7.35 «Играй, гармонь любимая!»
8.20 М/ф «Джейк и пираты Нетландии»
8.50 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 Умницы и умники
9.45 «Слово пастыря»
10.15 Смак 12+
10.55 «Жизнь как кино» 12+
12.15 «Абракадабра» 16+
15.15 «Да ладно!» 16+
15.50 «Народная медицина» 16+
16.50 «Жди меня»
18.10 «Человек и закон» 16+
19.15 «Минута славы» шагает по стране» 12+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
22.50 Х/ф «СУМЕРКИ. САГА. РАССВЕТ» 16+
1.00 Х/ф «МУЛЕН РУЖ» 18+
3.25 Х/ф «МОЙ ДОМАШНИЙ ДИНОЗАВР»
5.20 Контрольная закупка

### РТР

4.50 Х/ф «ПЯТЬ МИНУТ СТРАХА»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.20 «Военная программа»
8.50 Субботник
9.30 «Городок»
10.05 «Бермудский треугольник. Логово дьявола»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 12+
12.25, 14.30 Т/с «ГАИШНИКИ. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 12+
15.05 Субботний вечер
17.20 «Танцы со звездами» Сезон - 2012
20.00 Вести в субботу
20.45 Концерт, посвященный Дню сотрудника органов внутренних дел Российской Федерации. Прямая трансляция из Государственного Кремлевского Дворца
23.40 Х/ф «УДИВИ МЕНЯ» 12+
1.30 Горячая десятка. 12+
2.40 Х/ф «ДУБЛЕРЫ» 16+

### ЧУВАШИЯ

8.10-8.20 Вести-Чăваш ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35 Х/ф «ВЕСЕЛЫЕ РАСПЛЮЕВСКИЕ ДНИ»
12.00 «Мой серебряный шар. Эраст Гарин»
12.45 Большая семья. Игорь Бутман.
13.40 Пряничный домик. «Малиновый звон»
14.10 Х/ф «БЕЛЫЙ ПУДЕЛЬ»
15.15 М/ф «Высокая горка» «Кораблик»
15.45 «Уроки рисования с Сергеем Андриякой» «Пионы в карандаше»
16.15 «Атланты. В поисках истины» Авторская программа Александра Городницкого.
16.45 Гении и злодеи. Василий Баженов.
17.15 «Планета людей»(Великобритания). «Джунгли. Люди деревьев»
18.10 Вслух. Поэзия сегодня
18.50 «Больше, чем любовь»
19.35 Д/ф «На пластиковой игле»
21.10 «Романтика романса» Ансамбль «Песняры»
22.05 «Белая студия»
22.45 Х/ф «ПРОКЛЯТИЕ НЕФРИТОВОГО СКОРПИОНА»
0.30 Концерт Оскара Питерсона
1.30 М/ф «Шут Балакирев» «Сказка о глупом муже»
1.55 «Легенды мирового кино»
2.25 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»

### НТВ

5.35 Т/с «СУПРУГИ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок с Оскаром Кучерой 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.25 «Л.И. Брежнев. Смерть эпохи» 12+
14.20 «Поедем, поедим!»0+
15.05 Своя игра 0+
16.20 Следствие вели... 16+
17.20 «Очная ставка» 16+
18.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
19.25 «Профессия - репортер» 16+
19.55 «Программа максимум. Расследования, которые касаются каждого» 16+
21.00 «Русские сенсации» 16+
22.00 Ты не поверишь! 16+
23.00 «Реакция Вассермана» 16+
23.35 «Метла» Наталии Метлиной 16+
0.30 «Луч Света» 16+
1.05 «Школа злословия» Ирина Антонова 16+
1.55 Т/с «ПОГОНЯ ЗА ТЕНЬЮ» 16+
3.55 Т/с «ВИСЯКИ» 16+

## ВОСКРЕСЕНЬЕ, 11.11

### ПЕРВЫЙ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА»
7.45 «Служу Отчизне!»
8.20 М/ф «Аладдин»
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.15 Среда обитания. «МОШЕННИКИ» 12+
13.20 Х/ф «ЖЕСТОКИЙ РОМАНС» 12+
16.10 «Кто хочет стать миллионером?»
17.20 «Большие гонки. Братство колец» 12+
19.00 «ДОстояние РЕспублики: Игорь Тальков»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Мульт личности» 16+
22.30 «Yesterday live» 16+
23.30 «Познер»
0.30 Х/ф «ЛЮБОВЬ ЗА СТЕНОЙ» 16+
2.30 Х/ф «БИЛЕТ В ТОМАГАВК» 12+
4.20 Контрольная закупка

### РТР

5.20 Х/ф «ГОРОД НЕВЕСТ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама»
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10, 14.30 Х/ф «ПРОЕЗДНОЙ БИЛЕТ» 12+
15.35 «Рецепт ее молодости»
16.05 «Смеяться разрешается»
18.05 «Битва хоров. Закулисье»
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «ПОЗДНЯЯ ЛЮБОВЬ» 12+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
Вещан е по кабельным сетям с 1.25 ДО 5.00
1.25 Х/ф «НАДУВАТЕЛЬСТВО» 16+
3.30 «Бермудский треугольник. Логово дьявола»
4.25 «Городок»

### ЧУВАШИЯ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

**На канале «Россия 2»**

9.1 0-9.35 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «ГАДЮКА»
12.15 «Легенды мирового кино»
12.45 М/ф «Смех и горе у Бела моря» «О рыбаке и рыбке»
13.55 Д/ф «Рыжая лисица острова Хоккайдо»
14.50 «Что делать?»
15.40 Виртуозы Богемии
16.45 Д/ф «Ван Гог - нарисованный словами»
17.40 Итоговая программа «Контекст»
18.20 Х/ф «КОЛЯ - ПЕРЕКАТИ ПОЛЕ»
20.00 Премьера сезона. Большой балет
22.10 Х/ф «ПАРТИЯ В ШАХМАТЫ»
23.50 Д/ф «Катрин Денев»
0.45 «Джем-5» с Даниилом Крамером. Лайонел Хэмптон
1.50 М/ф «Дарю тебе звезду»

### НТВ

5.50 М/ф 0+
6.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Еда без правил» с Сергеем Жигуновым 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.20 СОГАЗ - Чемпионат России по футболу 2012/2013. «Локомотив» - «Анжи»
15.30 «Бывает же такое!» 16+
16.20 «Развод по-русски» 16+
17.20 И снова здравствуйте! 0+
18.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
20.00 Чистосердечное признание 16+
20.50 «Центральное телевидение. Информационно-развлекательный воскресный канал» 16+
23.20 Х/ф «КАЗАК» 16+
1.10 Т/с «ПОГОНЯ ЗА ТЕНЬЮ» 16+
3.10 Т/с «ВИСЯКИ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

## Спорт хыпарӗсем

# Калайкассисемпе Орининсем палӑрчӗҫ

Иртнӗ кунсенче «Сывлӑх» физкультурӑпа спорт комплексӗнче шкул ачисен баскетбол енӗпе уҫӑ ӑмӑртӑвӗ иртрӗ. Ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗ – «Сывлӑх» ФСК кубокне ҫӗнсе илессишӗн хӗрсен тата яшсен командисем уйрӑммӑн вӑй виҫрӗҫ.

Чи пултаруллисем мала тухрӗҫ. Хӗрсен 8 командинчен ҫаксем палӑрчӗҫ: 1-мӗш вырӑнта – Калайкассинчи вӑтам шкулӑн, 2-мӗш вырӑнта – Орининти вӑтам шкулӑн, 3-мӗшӗнче – Мӑн Сӗнтӗрти вӑтам шкулӑн командисем. Яшсен 11 команди йышӗнче малти вырӑнсене ҫак командӑсем тухма пултарчӗҫ: 1-мӗш вырӑна – Орининти вӑтам шкулӑн команди, 2-мӗшне – Калайкассинчи вӑтам шкулӑн команди, 3-мӗшне – Муркашри вӑтам шкулӑн команди.

Ҫӗнтерӳҫӗсемпе призерсем ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗ – «Сывлӑх» физкультурӑпа спорт комплексӗн парнисемпе грамотисене тивӗҫрӗҫ.

# Чул хула облаҫӗнчен – ҫӗнтерӳпе

Районти ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗн С. Черкашин аслӑ тренерӗпе О. Сютруков тренер ертсе пыракан бокс секцийӗ ӑнаҫлӑ ӗҫлесе пынине унта ҫӳрекен ачасен ӳсӗмӗсем тӑтӑшах ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Акӑ нумаях пулмасть Чул хула облаҫӗн виҫӗ куна тӑсӑлнӑ уҫӑ ӑмӑртӑвне те хутшӑнма кӑна кайса килмерӗҫ боксерсем. Унтан черетлӗ ҫитӗнӳсемпе таврӑнчӗҫ Муркаш районӗн каччисем: Иван Налимов (40 кг виҫе категорийӗнче), Иван Никитин (38 кг) тата Стас Кожевников (56 кг виҫе категорийӗнче кӗрешсе спорт маҫтӑрӗн кандидачӗн нормативне те пурнӑҫланӑ!) ӑмӑртӑвӑн ҫӗнтерӳҫисем пулса тӑнӑ. Алексей Кудряшов (34 кг) иккӗмӗш вырӑн ҫӗнсе илме пултарнӑ. Кирилл Пугачев (44 кг), Николай Пегасов (32 кг) тата Денис Грачев (42 кг) виҫҫӗмӗшсем пулнӑ.

**Хамӑр инф.**

## Тав тӑватпӑр

Ҫӗньял Муркашра пурӑннӑ Юлия Кирилловна Соколована юлашки ҫула ӑсатма пулӑшнӑшӑн, йывӑр хуйха пирӗнпе пайланӑшӑн тӑвансене, кӳршӗсене, ялйыша, унта пынӑ мӗн пур ҫынна чӗререн тухакан тав сӑмахӗ калатпӑр.

**Соколовсен ҫемйи.**


**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL и HD. Триколор 7300 руб.. Телекарта 3000 руб. с. Моргауши. Тел.: 8-906-385-29-30. 2-10.**

**Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43. 1-12.**

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 8-10.**

**Заводские пластиковые окна в 2 раза дешевле! Замер, доставка бесплатно! Тел.: 8-906-385-29-30. 9-10.**








## Пӗлтерӳсем. Объявления

### Объявляется конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики со 02 ноября 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненную и подписанную анкету по установленной форме с приложением фотографии;

в) копию паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

- копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;
- копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления ( по 01 декабря 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д.Москакасы, ул.Московская, д.54.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 66-2-85, факс 66-4-00, эл. почта mrgmocka_pos@cdx.ru, официальный сайт администрации Москакасинского сельского поселения: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=424.


**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-10.**

**ОКНА И ДВЕРИ**
**окна ПВХ-VEKA, стальные двери от простых до элитных, от дешевых до дорогих. Гарантия 3 года. Кредит, рассрочка. Все под ключ. Адрес: г. Ядрин, ул. 50 лет Октября, д. 78. Тел.: 8-961-344-53-47, 8(83547)23-2-96. 4-5.**

**МЫ ПОМОЖЕМ ЗАРАБОТАТЬ!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются **ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 27 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 4-4.






**Только 9 ноября с 9-00 до 17-00 час. покупаем ВОЛОСЫ до 50000 рублей за 1 кг, не короче 27 см.**
**ЧАСЫ на запчасти, фотоаппараты, значки.**
**Адрес: ул. Гагарина, 2. Парикмахерская «Ольга».**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 9-10.**





**Февраль уйӑхӗнче ҫиччӗмӗш пӑруламалли шурӑхӗрлӗ ӗне сутатӑп. Тел.: 8-937-388-18-13.**

* * *

**Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03.**

* * *

**Май пуҫламӑшӗнче иккӗмӗш пӑруламалли хура-шурӑ тӗслӗ ӗне сутатӑп. Юнкӑ ялӗ. Тел.: 8-905-199-50-12.**

* * *

**Декабрьте улттӑмӗш пӑруламалли хура тӗслӗ ӗне сутатпӑр. Тел.: 8-905-198-17-06.**

* * *

**Вӑкӑр, пӑру, сурӑх туянатпӑр. Тел.: 8-987-665-02-13.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 5-13.**

* * *

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-4675, 8-927-880-0483. 7-10.**

* * *

**Продам: кровати армейского образца – 1000 руб.; матрац, подушка, одеяло – 700 руб.; дверь металлическая производства Китай – 3000 руб. Доставка бесплатная. Тел.: 8-987-395-17-56, 8-987-540-95-64. 10-12.**

* * *

**ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН, ТОРФ, с доставкой до 30 т. за 1 рейс. Тел.: 8-927-668-70-15. 9-12.**

* * *

**Вӑкӑр, пӗчӗк пӑру, сурӑх туянатпӑр. Тел.: 8-905-343-60-63. 5-10.**

* * *

**В строительную фирму требуются монолитчики. Есть возможность официально трудоустроиться. Вахта 20 дней, з/п по окончанию вахты. Тел.: 8-964-531-05-38, 8-917-066-58-58. Владимир. 4-4.**

* * *

**В стабильную компанию на постоянную работу в связи с развитием требуются наполнители баллонов. Достойная заработная плата, официальное трудоустройство, социальные гарантии. Тел.: (843)255-32-67. 3-4.**

* * *

**Куплю квартиру в Москакасах, от 60 кв. м. Тел.: 8-917-670-73-98. 2-2.**

* * *

**В ООО «Агрофирма «Путь Ильича» на постоянную работу требуются: агроном, системный администратор, осеменатор, электрик. Справки по телефону: 62-6-44. 2-2.**

* * *

**Январьте пӑруламалли хӗрлӗ тынашки сутатпӑр. Тел.: 8-927-998-94-73, 8-906-385-59-98. 2-2.**

* * *

**На территории рынка с. Большой Сундырь работает шерсточесальный цех. Работаем с 7 часов утра. Тел.: 8-906-388-22-02.**

* * *

**Продаю самодельный трактор на базе Т-25. Цена 35000 руб. Тел.: 8-917-661-80-77.**

* * *

**Продаю необрезные дубовые доски разной длины, толщина 5–8 см. Цена договорная. Тел.: 8-908-307-07-44. Николай.**

* * *

**Сакӑр уйӑхри хура-шурӑ тӗслӗ тынашки сутатпӑр. Тел.: 8-905-028-43-69.**

* * *

**Ноябрӗн 14-мӗшӗнче тӑваттӑмӗш пӑруламалли хӗрлӗшурӑ тӗслӗ ӗне сутатпӑр. Тел.: 8-919-677-74-19, 8-937-390-25-95.**

* * *

**Ҫамрӑк ӗне, чупнӑ пӑру туянатӑп. Тел.: 8-961-339-64-82.**

Муркаш район администрацийӗн культурӑпа архив ӗҫӗн пайӗ, культура ӗҫченӗсен профсоюз комитечӗ, Москакассинчи Культура ҫурчӗ ҫумӗнче йӗркеленнӗ «Шуҫӑм» халӑх коллективӗ кунта нумай ҫул «Шуҫӑм» юрӑпа ташӑ ушкӑнӗнче пултарулӑх ертӳҫинче ӗҫленӗ

**Геннадий Афанасьевич**
**АЛЕКСЕЕВ**

чылай вӑхӑт чирленӗ хыҫҫӑн вилсе кайнӑ пирки тарӑннӑн чӗререн хурланса пӗлтереҫҫӗ.

## Прогноз погоды

| | суббота 3 ноября | | | | воскресенье 4 ноября | | | | понедельник 5 ноября | | | | вторник 6 ноября | | | | среда 7 ноября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -1 | -1 | +1 | -1 | 0 | +1 | +4 | +5 | +6 | +7 | +7 | +4 | +7 | +5 | +6 | +9 | +11 | +8 | +4 |
| Давление мм | 754 | 753 | 752 | 749 | 747 | 746 | 746 | 745 | 743 | 742 | 744 | 742 | 741 | 738 | 735 | 731 | 726 | 724 | 724 |
| Влажность % | 91 | 92 | 82 | 80 | 80 | 96 | 93 | 92 | 90 | 94 | 88 | 93 | 94 | 99 | 94 | 91 | 92 | 94 | 76 |
| Ветер м/сек | 3 | 3 | 5 | 5 | 4 | 5 | 5 | 6 | 7 | 7 | 2 | 3 | 3 | 2 | 5 | 8 | 5 | 6 | 7 |
| | З | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 08:05 | 17:07 | | | 08:07 | 17:05 | | | 08:10 | 17:03 | | | 08:12 | 17:01 | | 08:14 | 16:59 | |
| Луна восход / заход | | 19:58 | 12:21 | | | 21:01 | 12:58 | | | 22:10 | 13:26 | | | 23:22 | 13:50 | | 00:37 | 14:10 | |


**Муркаш районӗнчи «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин “Муркаш районӗн «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫат редакцийӗ” Чӑваш Республикин хай тытӑмлӑ учрежденийӗ.

**Тӗп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чӑваш Республики, Муркаш ялӗ, Мир урамӗ, 9А ҫурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тӗп редактор - 62-1-36, яваплӑ секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнӑҫ пайӗ - 62-2-82, экономика тата социаллӑ пурнӑҫ пайӗ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Ҫыхӑну, информаци технологийӗсен тата массӑллӑ коммуникаци сферине пӑхса тӑракан Федераллӑ службӑн Чӑваш Республикипе – Чӑваш Енпе ӗҫлекен управленийӗ 2012 ҫулхи юпа уйӑхӗн 11-мӗшӗнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленӗ.

Калӑпӑшӗ 2 пичет листи.
Ал ҫырӑвӗсене рецензилемеҫҫӗ, каялла тавӑрса памаҫҫӗ, 2 страницӑран пысӑкраххисене йышӑнмаҫҫӗ.
Рекламӑпа пӗлтерӳсен чӑнлӑхӗшӗн вӗсене паракансем яваплӑ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСӖ: 54822.
Хаҫат юн тата шӑмат кунсерен тухать.
Номер дежурнӑйӗ Николаева Н.Н.
Пичете панӑ 02.11.2012 ҫ.
Пичете памалли вӑхӑт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чӑннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4683.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Ҫӗнтерӳ ялавӗ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.